Чăваш халăх ăс-хакăлĕпе ӳнер академийĕ

**Е.Е. Ерагин**

# Яраксем çĕнтерĕве çывхартнă

Шупашкар
«Çĕнĕ Вăхăт»
2015

УДК 908(470.344)
ББК 26.890(2Рос.Чув)
Е 69

Кӗнекене Чӑваш халӑх ӑс-хакӑлӗпе ӳнер академийӗн пичет комиссийӗ 16.04.2015 ырланӑ

Редактор: Чӑваш патшалӑх гуманитари ӑслӑлӑхӗсен институчӗн пай пуҫлӑхӗ Г.А. Дегтярёв, филологи ӑслӑлӑхӗсен кандидачӗ

Рецензент: Чӑваш патшалӑх гуманитари ӑслӑлӑхӗсен институчӗн ертсе пыракан ӑслӑлӑх ӗҫтешӗ Г.Б. Матвеев, истори ӑслӑлӑхӗсен кандидачӗ.

Ерагин Е.Е.
Яраксем ҫӗнтерӗве ҫывхартнӑ. – Шупашкар:
«Ҫӗнӗ Вӑхӑт», 2015. – 140 с.

Кӗнекере ЧР Муркаш районӗнчи Катькас ял тӑрӑхне кӗрекен Яраккасси ҫыннисем 1941-1945 ҫулсенче кӗрленӗ Тӑван ҫӗршывӑн аслӑ вӑрҫине хутшӑнни пирки каланӑ. Кӑларӑма ялта сыхланса юлнӑ сӑмах-юмахпа ҫеҫ мар, сӑнӳкерчӗксемпе те, тивӗҫлӗ литературӑри тата архивсенчи материалсемпе те пуянлатнӑ.

© Ерагин Е.Е., 2015
© Чувашская народная академия наук и искусств, 2015

*Йăлтăр кăна ай вут çути,*
*Çутисем курнаççĕ – ăшши çук.*
*Ах, аттеçĕм, аннеçĕм,*
*Ятăрсем пур та – хăвăр çук…*
(Ваттисене асăнса юрланинчен)

Çак кĕнеке иртнĕ ĕмĕрте пурăнса иртгернĕ тăван Яраккасси ялĕнчи Турра юрăхлă ырă асăмĕ пултăр. Çапла пултăр!

Тăван çĕршывăн аслă вăрçи вĕçленнĕренпе
70 çул çитнĕ май.




Яраккасси ялĕн планĕ, 1941 ç.

Çĕнтерӳ кунне вăрçă пĕтнĕренпе 20 çул иртсен шавлă уявлама пуçларĕç. 1965 ç. уяв ячĕпе медаль илнĕ ветерансем Атăл хĕрринче, Отăра (Кĕнервăрринче), çав кун пуçтарăнакан тапăра («9 май поххи») маттуррăн, илемлĕн курăнатчĕç, вĕр-çĕнĕ медалĕсене йăлтăртатса çӳретчĕç. Çамрăкрах ветерансем 40 çулта çехчĕ-ха.

1966 ç. Калайкассинче, Мăнçол хĕрринче, Яраккасси, Калайкасси, Карамалькасси, Чурикасси тата Кораккасси ялĕсенчен вăрçăран таврăнманнисене халалласа халăх вăйĕпе палăк лартрĕç. Вилнисенне кашнин ятне çырса хучĕç, Яраккассинчен унта 18 çын пулчĕ.

Вăрçă вĕçленнĕренпе 50 çул çитсен пирĕн республикăра Астăвăм кĕнеки тухма тытăнчĕ: малтан вăрçăра вилнисене пайăррăн асăнса, темиçе томпа, хыççăн – таврăннисен списокĕсемпе. Пирĕн ялсем те унта пур: Астăвăм-Память. Том 5. Чебоксары, 1999. С. 492-493; Астăвăм-Память. Том 1. Часть 2. Чебоксары, 2003. С. 287. Астăвăм кĕнекине кăларма май çитерсе çĕршыв ертӳлĕхĕ пысăк, пĕлтерĕшлĕ ĕç турĕ. Паллах, тĕплĕнрех тишкерсен унта çитменлĕхсене те курма пулать, уйрăмах вăрçăран сывă тухнисем пирки. Вилнисен спискĕнче кунта Яраккасси ялĕпе 22 çын ячĕ тăрать, таврăннисен списокĕнче вара – 11 çын хамăр ял ячĕпех, ытти вырăнсемпе – 2 çын.

Çĕнтерĕве тылра туптакансене те асăнмаллах. Çапăçакан çар валли тĕрлĕ хĕç-пăшал, техника япалисем, боеприпас, апат-çимĕç, тумтир тата нумай-нумай ыттине вĕсем фронта вăхăтра хатĕрлесе çитерсе панă-çке.

Вăрçа кайнисем, вăрçă вăхăтĕнче ĕçлекенсем халĕ ĕнтĕ пирĕн хушăра çукпа пĕрех. Вĕсем хăйсен тумхахлă пурнăçĕ çинчен тем пекех пире каласа парасшăн пулĕ. Çакă кĕнеке пултăр ĕнтĕ хальлĕхе вĕсен сăмахĕ. Вĕсем – пирĕн умĕнхи ялйыш, пирĕн ырă тăвансем.

Пирĕн Яраккассинче çуралса ӳснĕ, хутшăннă, пĕр ăру-ра мар-тăк, малтанхи ĕмĕрсенче тăванлă пулнă: юнпа е хурăнташ, кума е хăйматлăх. Çут тĕнчепе савăннă ĕнтĕ, çавăнпа эпир, ку ăрусем, çĕр çинче çӳретпĕр мар-и. Пурăннă чух, ялта малалла мĕнле пулатьши, камсем пурăнĕç-ши, тесе те шутланă пуль. Халăх ирĕкĕнчен тухмасăр пурнăçа çын пулса пурăнса ирттерес тенĕ ĕнтĕ: çутçанталăка пуçтайса, турра пуççапса, ват çынна пăхма пултарса, парăма тавăрма тăрăшса. Авалхи йăлапа, вĕсем, леш тĕнчерисем, хамăра асăниччен, эпир вĕсене асăнас терĕмĕр. Паянхи ялйыша вăрçă вăхăтне аса илтерсе эпĕ ĕлĕк çăкăр тутлăрах пулнă е хĕвел хĕрӳллĕрех çутатнă тесе каласшăн мар. Çăкăрĕ ун чух чăнах та хаклă пулнă, тути чылай хушă манăçман. Асаилӳсене çуратса иртнисĕр малашлăха курма çукки çинчен каласшăн. Пулса иртни, чăтса ирттерни çитес кунсене çутăрах пултарассине, ырăрах тăвассине астутарасшăн.

Кĕнеке содержанине пĕтĕмĕшле пĕр-пĕр ĕç-пуç пирки е çын çинчен ялта каланипе, ялйышра упранса юлнă сăмах-юмах тăрăх йĕркеленĕ. Асăннă кашни çыннăннех пĕлнĕ таран (е пĕлсе çитнĕ таран) çуралнă тата вилнĕ çулĕсене кăтартнă, çав вăхăтра хăш килте пулнине хура курсивлă цифрăпа палăртнă. Тăтăшах çырма тивекен сăмахсене çапла кĕскетнĕ: область – обл., районĕнче – р-нче, çулта çуралнă – ç.ç., çулсем(-нче) – çç., çул(та) – ç.


1812 ç.


1877 ç.


1904 ç.


1919 ç.

Сулахайра пĕрремĕш – Петров Николай Герасимович



Коростень хули, 5.05.1940




Киев обл. Иванковски р-нчи Ораное ялĕ, 27.03.1988

Варламов Валерий (Муркаш), Михайлов Юрий (Муркаш), Замятин Виталий Петрович (Яраккасси) Чернобыльте

Малти Ерагин Аганей Евгеньевич



Новосибирск, 5.08.2012

# I. Малтанхи вăрçăсене хутшăнни

Пирĕн ялсем салтакра пулнипе пур вăхăтра та мăнаçланнă, çар тумĕ те пысăк хисепре. Арçын ача çуралсанах ваттисем салтака юрăхлă пултăр тесе пиллеççĕ. Салтак атти тарлă та, йывăр та. Ахальтен мар, арçын ятне илтес тесен малтан салтака кайса килмелле, пўрт лартмалла, ача-пăча çитĕнтермелле теççĕ.

Повестка илсен çамрăк çын çывăхри ялсем тăрăх салтак чупнă, тăвансем патне, ялйышра кĕрсе тухнă, вĕсемпе сывпуллашнă. Кĕртнисем, таса, такăр çулпа çўресе таврăнма ыр сунса, ун çине пĕр хăлаç пир уртса янă. Салтак ачисем урапа е çуна çинче ялти хĕрсем пуçтарса панă тутăрсенчен тунă салтак тутрине вĕлкĕштернĕ, салтак юрри юрланă. Юлашки каçĕнче пулас салтак килне тăван-пĕтен, ялйыш пухăннă. Сĕтел хушшине лариччен вăл амăшĕпе (тăванĕпе) пĕрле кайса хăйĕн йывăçĕ (юманĕ) тавра виççĕ çаврăннă.

Тĕпеле пăтă хуранĕ, сăра пички илсе тухнă. Хуран çине (халь сĕтел çинех) пуçламан çăкăр, çиеле чăкăт хунă. Ваттисем, салтак ачи, чи çывăх çынсем хуран тавра (е сĕтел тавра) тăнă.

«Эй, уйăх-хĕвел, пирĕн çине пăх, çак ачан салтака каймалла. Уйăх-хĕвел, ăна çак çĕр çинчех усраса, ун çине çутатса тăрăр. Ăна киле таврăнса ана тăрăх ывăçпа тырă сапма пар. Авланса ачаллă-пăчаллă, кинлĕ-хĕрлĕ, хуртлă-хăмăрлă, выльăхлă-чĕрлĕхлĕ, киллĕ-çуртлă пулма пар ăна. Кил-çурт пуç пулма пар. Сухапуç хыççăн чипер шăхăрса утмалла пултăр. Хулана илсе кайнă чух эпир ăна каялла лартса ярăпăр, çавăн пекех унăн каялла килмелле пултăр. Киле таврăнса, каç-ир тула тухса çўресе кил-çурт пăхакан пултăр вăл. Унăн сĕтел хушшине ларса, тирĕк пуç пулса, кучченеç салатмалла пултăр. Çăкăр пуçламалла пултăр, пура пуçламалла, пичке пуçламалла, такмак кантри

салтмалла пултăр унăн. Ку таранччен вăл епле çулсемпе утса çӳренĕ, çав çулсемпе утса çӳремелле пултăр.

Ватти сăмахĕ хыççăн салтака каякан ачана çăкăр пуçлаттараççĕ. Çăкăр сăмси çĕре ӳкет, месерле ӳксен – лайăх, ӳпне ӳксен – япăх паллă. Çак чĕлле амăшĕ (е арăмĕ) чăланта çип çине çакнă, мĕн таврăниччenex вăл мĕнле тăнине кура ывăлĕн (мăшăрĕн) инçетри çул-йĕрне тимленĕ. Пăтă çиме лариччен салтак ачи, «Эй, Турă, халиччен мана лайăх, таса усрарăн, çăкăрпа сĕтел тулли усрарăн. Малалла та, Турă, чипер, лайăх усра, кил-çурта каялла килме пар. Мăн турă, çăкăрпа асăнатпăр, таса усра. Çулта-йĕрте сыхла мана мĕнле те пулсан каялла киле çавăр мана. Чипер кунçул пар. Турăпа патша ĕçне туса татма вăй-хал пар. Çак кил-çуртран ан уйăр. Тепĕр пилĕк çултан çак ырă çĕр-шыва курма пар.

Салтак ачи ячĕпе сăра пички пуçланă. «Çак пичкерен сăра ĕçме татах кил», – тесе ăна пĕрремĕш куркине параççĕ. Вăл хăй сăра ĕçтерсе çаврăннă чухне килтисем курка çине укçа хурса параççĕ: «Çак укçана каялла тавăрса пар, – теççĕ. Тухса кайнă чух салтака каякан тус-тантăшĕсенчен тытăнса сĕтел тавра виççĕ çаврăннă, килтен те, ял укăлчинчен те çурăмпа тухнă. Ял хапхинчен пушатнă сăра (е эрех) савăтне çапса çĕмĕрнĕ, çул çине укçа ыватнă. Станцăна, пристане е хăйсене пухнă ытти çĕре çитиччен, таврăнмалли çул ан манăçтăр, тесе урапа çинче ял еннелле пăхса (çурăмпа малалла ларса) çара тухса кайнă.

Аттин улĕ поличчен
Анчăк çури полас-мĕн,
Çын пурсассăн вĕрес-мĕн,
Çын пурсассăн вĕрес-мĕн.
Апин улĕ поличчен
Йăмра шулчи полас-мĕн,



Ярак каччисем Лукоянов Борис Семеновичăнне (*3*, 1954 ç.ç.) салтак чупма тухас умĕн. 24.10.1972.



Çартан тин çеç таврăннă Клопов Владислав Васильевич (1955-2007) салтака тухса каякан Виталий шăллĕпе (1957ç.ç.). 8.11.1974



Вускассисем Мышев Андрей Демьяновича çара ăсатаççĕ. Вăл 1918 ç.ç., 27.12.1942 çапăçура вилнĕ; ăна Калуга обл. Людинов р-нчи Запрудное ялĕнче пытарнă.

Кĕрхи çилпе вĕçес-мĕн,
Çорхи шупа йохас-мĕн.

Аттин та килхошши, ай, çатма пак –
Çăмарта та косса, ай, каяс пак;
Çăмарта та косса каяс пак мар,
Эпĕр те тохса, ай, каяс-пак.
Анатран хăпарат арпус баржи,
Илетри, илместри – корма тохăр;
Ой, тăвансам, ялйышсам,
Сонатри, сонмастри – ăсатма тохăр.
Шор чăлан та çомĕнчи çут чассийĕ
Çапма та вăхăт, ай, çитрĕ поль;
Ой, тăвансам, хорăнташсам,
Кайма та вăхăт, ай, çитрĕ поль.

Çăлтăр виттĕр çол корăнат –
Эпир каяс çол, витнă;
Ойăх виттĕр ой корăнат –
Эпир порăнас ой, витнă.
Ойрăлтăм, ойрăлтăм çĕр-шуран,
Ойрăлтăм, ойрăлтăм атти-апиран,
Ойрăлтăм, ойрăлтăм ялйышран,
Ойрăлтăм, ойрăлтăм арăмран.

Кашни ăру валлиех вăрçă пулать тени тĕрĕс пулĕ. Акă, ***Чашкин Данил Алексеевич*** (1834–1903, **9**, кайран **10**), акă, 1855 ç., Çĕвастоппăл (Крым) вăрçи чухне, салтака кайнă, 25 çул патша ялавĕ айĕнче çӳренĕ. Туркка вăрçине (1877–1878) хутшăннă. Юлашки вăрçинчи пĕр кĕмĕл медалĕ килте упранса юлнă (мамокăн ами çине вăл лекнĕччĕ те). Вулăс пухăвне е чиркĕве пырсан («кăкăр тулли шăкăрин медальпе!») пурте ветеранпа алă тытма ăнтăлатчĕç, тет.

Турккӑ вӑрҫинче ҫавнашкалах *Яргеев (Голубев) Наум Григорьевич* (Лявин, **19**), *Мясников Михей* (1855 ҫ.ҫ., маҫокӗ Карамалькассине Яракран пурӑнма куҫнӑ, ҫӗрӗ кунтах пулнӑ), *Пошкарти (Павлов) Герасим Евдокимович* (1842–1888, хамӑр ялти Замятин Степанпа Федор, 25, кукашшӗ) т.ыт. те пулнӑ. Вӗсем ун чухне виҫҫӗмӗш мобилизаципе (22.07.1877) ҫара лекнӗ, иккӗмӗш пехота дивизийӗн иккӗмӗш бригадинче (штабӗсем Хусанта) тӑнӑ, пулмалла.

1914–1918 ҫҫ. пынӑ Ярман вӑрҫине (Пӗрремӗш тӗнче вӑрҫи) вара нумай ҫын хутшӑнни паллӑ. Ку пысӑк хирӗҫтӑрура хӗрӗхе яхӑн патшалӑх хутшӑннӑ, пурӗ 10 млн ҫын вилнӗ, 20 млн ытла аманнӑ. Раҫҫей унта 19.07.1914 пуҫласа 3.03.1918-ччен ҫапӑҫнӑ. Пирӗн ун чухнехи уес центрне килнӗ васкавлӑ телеграммӑран: «Чикме уес исправникне А.В. Богородицине, 16.07.1914. Пӗтӗмӗшле мобилизаци ҫинчен пӗлтерессине кӗтӗр. Вунҫиччӗмӗшӗ – пӗрремӗш кун. Унччен пӗтӗмпех хатӗр пултӑр, кама кирлӗ – пӗлтерӗр. Сборный пунктсем таврашӗнче, запасниксем пуҫтарӑнса каякан ҫул-йӗрте эрех пачах суттармалла мар. Хусан кӗпӗрнаттӑрӗ П.М. Боярский».[1]

*Кольцов (Кушманов) Андриян Тимофеевич* (1887 ҫ.ҫ., **3**), *Горшков Андриян Иванович* (1887–1929, Хӗрлӗ Онтрян, **5**) тата *Голубев Деомид Наумович* (1887–1978, Эмек, **19**) тантӑшсем вӑрҫа пӗрле тухса кайнӑ, пӗрлех яла таврӑннӑ. «Золотой Липово патӗнче нимӗҫсемпе эх! ҫапӑҫрӑмӑр… 1917 ҫ. винтовкӑсене пытарса хутӑмӑр, хамӑр поездпа килелле шӑлтӑмӑр».

*Клопов Николай Тихонович* (1887 ҫ.ҫ., **34**) ку вӑрҫӑра пуҫне хурать. Унӑн пиччӗшӗ *Клопов Петр Тихонович* (1885–1969, **9**) тыткӑна лекнӗ, Латвире пӗр хуҫа патӗнче атӑҫӑра ӗҫлет. Нимӗҫсем пырсан (?) унтан тухса тарать. Петроград ҫар округӗн хушӑвӗпе тыткӑн-

ран тарса таврӑнакансене медаль памалла тунӑ пулнӑ, вӑл вара ҫавӑншӑн киле кайма ирӗк илет. 1930 ҫҫ. вӑл репрессине лекнӗ.

Поскилсем ***Щербаков Михаил Федорович*** (1891–1948, Шӑрпӑк Михали, **13**), ***Чашкин Георгий (Егор) Данилович*** (1895 ҫ.ҫ., **10**), ***Кольцов Яков Игнатьевич*** (1894–1959, **6**) ку вӑрҫӑран сывах яла ҫитеҫҫӗ. Якку ҫапах аманнӑ. Унӑн шӑллӗ ***Кольцов Иван Игнатьевич*** (1896–1916, **6**) фронта ҫитсен темиҫе уйӑхран пуҫне хурать.

***Замятин Ефим Тимофеевич*** (1886–1951, Шӳр Еххӗм, **22**) кавалерист пулса тӑшманпа ҫапӑҫнӑ. Унӑн пиччӗшӗ ***Замятин Андрей Тимофеевич*** (1876 ҫ.ҫ., **22**, кайран **14** килте пурӑнма куҫнӑ) унтер-офицер, взвод командирӗн ҫумӗ пулнӑ. Вӑрҫӑран таврӑнаймасть: «Ытла хаяр, ҫирӗп пулнӑран ӑна хамрӑннисемех пенӗ тет-и». Вӗсен хирӗҫле кӳрши ***Клопов Иван Сергеевич*** (1879–1952, **33**) пӗррехинче тӑшман умӗнчех окопран тухса ташланӑ, лешсем вара пеме чарӑннӑ пулать. Тыткӑна лексен вӑл Австринче пурӑннӑ.

***Смелов Иван Яковлевич*** (1889–1968, **45**) 1911 ҫ. Карамальтан салтака кайнӑ, унтер-офицера вӗренсе тухнӑ. 1914 ҫ. тыткӑна лекет, виҫӗ ҫул Венгринче пурӑнать. Чӗлхине те чухлама пуҫланӑ. Тухса тарсан пӗрисем патне ҫӗр каҫма кӗрет, пӗр 1917 ҫ. Ҫӗрле, хайхи, килхуҫисем, ашшӗпе ывӑлӗ, тавлашнипе вӑранса каять. Ывӑлӗ текех полицие пӗлтересшӗн тет, ашшӗ чарать тет. Ирпе вара ашшӗ Ивана ҫул кӑтартсах ӑсатса янӑ. Унӑн пиччӗшӗ ***Мясников Михаил Яковлевич*** (1887 ҫ.ҫ., **43**) тепӗр шӑллӗпе ***Тимоххапа*** (1892 ҫ.ҫ., Карамальтах пурӑннӑ) пӗрле 1915 ҫ. вӑрҫа тухса кайнӑ. Тимохха таврӑнайман унтан.

***Кушманов Ефим Петрович*** (1889 ҫ.ҫ., **17**, кайран **4** киле кӗрет), ***Яргеев Иван Игнатьевич*** (1928 ҫ.вилнӗ, Пӗчӗк Иван, **24**) вӑрҫа пӗр вӑхӑталла 1914 е 1915 ҫ.

тухса кайнӑ. Пӗчӗк Иванпа ***Кобрчаков Ефрем Егорович*** (1890–1937, **37**) 281 Новомосковски полкри 10 ротӑра хӗсметре тӑнӑ. ***Кобрчаков Андриян Емельянович*** (1887–1941, Шор Онтрян, **38**, кайран **15** киле кӳҫнӗ) 235 Белебеевски полкра пулнӑ. Унӑн авланнӑ тантӑшӗ Купанов Михаил Иванович вара (1887–1915, 21) ҫак вӑрҫӑра вилет. ***Кошкин Алексей Филиппович*** (1884–1935, **42**) тӗрӗс-тӗкел таврӑнать. ***Мартьянов Николай Афанасьевич*** (1886–1914, яраксемех, Калайкассинче пурӑннӑ пулмалла) пӗрремӗш ҫулнех вилет. Калайкассинчи Воронов Спиридон Антонович 122 Тамбовски полкра пулнӑ, Таймасов Кузьма Андреевич – 21 Муромски полкра, Любимов Степан Прокопьевич фейерверкер – уйрӑм артиллери дивизийӗн 3 батарейинче, Карамальти Волков Андриян Иванович – 19 Костромски полкра, Портнов Степан Алексеевич бомбардир – запасри 2 артиллери бригадин 5 батарейинче, Морозов Ефим Захарович – запасри 95 батальонта т.ыт.те.[2]

Салтака малтан 21 ҫул тултармасӑр илмен. Ярман вӑрҫине вара 18 ҫул тултарнисене те илме тытӑннӑ. Акӑ ***Клопов Фома Яковлевич*** (1898–1921, **33**, кайран **26**), ***Кобрчаков Иван Степанович*** (1898 ҫ.ҫ., **38**) тата ***Кошкин Лука Иванович*** (1898 ҫ.ҫ., **41**) 1916 ҫ. ҫара каяҫҫӗ, кавалерине лекеҫҫӗ.

Тӗнче вӑрҫи кунӗн-ҫӗрӗн салтаксене ҫӑтнӑ. Ҫулталӑкранах ҫамрӑксене ҫеҫ мар, малтан ҫара юрӑхсӑр пулнисене те вӑрҫа ӑсатма тытӑннӑ. Сӑмахран, 1916 ҫ. мартра кӑна Чикме уесӗн ҫарӗҫ ертӳлӗхӗнче белобилетниксемпе аманса килнисене медкомисси витӗр кӑларса 590-шне юрӑхлӑ тесе йышӑнаҫҫӗ ҫав уйӑхрах (14-18.03.1916) вӗсене ушкӑншерӗн ҫара ӑсатаҫҫӗ. Тыткӑна лекнӗ Австро-Венгри, Германи салтакӗсем пирӗн енче сахал мар пулнӑ, вӗсене вӑрман кастарнӑ, ҫулсем юсаттарнӑ. Атӑл ҫинче, ытти ҫӗрте ӗҫлеттернӗ.Тыткӑна

лекнĕ офицерсене вара ирĕклĕрех усранă, ĕçлеттермен. Акă, 1916 ç. майăн 17-18 кунĕсенче Чикмене Хусантан тыткăнри 42 офицера килсе янă (28-шĕ венгрсем пулнă). Вĕсене Урлă-Çыранхĕрри урамĕнчи хула обществин çуртне вырнаçтарнă.[3]

Пур вăрçă та чи пысăк йывăрлăхсене ял çине тиет. Ярман вăрçи пуçлансан та халăхран лашасем, выльăх апачĕ, тырă, ĕне выльăх, çипуç-тумтир, урапаçуна т.ыт.те йӳнĕпе туянма пуçлаççĕ. Хырçă-куланай хăпарса каять, çĕнĕ тĕслисем тухаççĕ. Тата чирлисемпе аманнисене пулăшмалла, фронт таврашĕнчен тарса килнисене пулăшмалла, ăшă çипуçпа тивĕçтермелле. Пир нумай пуçтараççĕ. Вăрçă хирĕнчен куçса килнисене ун чух пирĕн тăрăхра Ильинккăра (çĕр çынна яхăн) тата Катькассинче, Çӳлтикассинче, Ишлейре, Чурикассинче т.ыт. ялсенче вырнаçтарнă.

Ярман вăрçи пĕтнĕ-пĕтмен Граждан вăрçи (1918–1922) пуçланса каять. Яраксен пĕрремĕш ушкăнне Хĕрлĕ çара (РККА) 1918 ç. кĕркунне мобилизациленĕ. Унта çаксем лекнĕ: ***Кобрчаков Илья Емельянович*** (1881 ç.ç., **38**), ***Чашкин Егор Данилович*** (**10**), ***Щербаков Николай Федорович*** (1897–1958, **13**), ***Кольцов Яков Игнатьевич*** (**6**), ***Щербаков Михаил Федорович*** (**13**, кайран **11** куçнă), ***Архипов Федор Филиппович*** (1895 ç.ç., **18**), ***Смелов Иван Яковлевич*** (**45**), ***Мясников Михаил Яковлевич*** (**43**, Карамальтан çара кайнă). Вĕсенчен Кобрчаков И.Е., Архипов Ф.Ф., Чашкин Е.Д. вăрçăран таврăнаймаççĕ. Егор Данилович ун чух Польша фронтĕнче пулнă, пĕрле кӳршĕри Щербаков Н.Ф. тата Кольцов Я.И., Карамальти Морозов Иван захарович та пулнă. Хырăмран лекнипе вилнĕ. Хĕрлисен ун чухне апат-çимĕç те, çар снаряженийĕсем те пĕтсе çитнĕ пулнă. Поляксем вара Варшава патĕнче вăйлă

пеме пуҫланӑ. Хӗрлисем нумаййӑн вилнӗ, ҫара уран тарнӑ. Ҫӑкӑр пачах юлман, командирсем, Варшавӑна илсен ҫӑкӑр пулать, тенӗ. Теприсем каланӑ тӑрӑх, ҫак ҫынсем пӗрле Чапаев дивизийӗнче пулнӑ. Якор вара пӗррехинче ӳсӗрпе, ҫӗрле, тӑшмана хирӗҫ перкелесе выртнӑ, окоп ҫине тухсан, лешсен пульли лекнипе, вилет. Смелов И.Я. ку вӑрҫӑра взвод командирӗ пулса ҫапӑҫнӑ, 1922 ҫулччен хӗсметре тӑнӑ.

***Клопов Яков Трофимович*** (1890–1930, Пӗчӗк Якку, **32**) подразделенийӗ, Колчака хӑваласа кайнӑ чух, Енисей кӗпӗрнинчи (халь Красноярск крайӗ) пӗр чӑваш ялне канма вырнаҫать. Килхуҫисемпе апла-капла калаҫнӑ май вӑл кӳршӗрех хамӑр енчен куҫса пынисем пурӑннине илтет. Кайса пӑхать те – ҫыннисем хамӑр яраксемех иккен. 16 кил ырӑнӗнчен 1910 ҫ. таврашӗнче куҫса кайнӑ, XIX ӗмӗрте ҫӑмарта усламӗпе ялта палӑрнӑ Гурьян Тимофеев тӑхӑмӗсем пулнӑ кусем. Ҫакӑн пӗр ывӑлӗ Ҫимон тӑватӑ ачипе (Павӑл, Микола, Отатти тата Кирула) ялтан Ҫӗпӗре тухса кайнӑ пулнӑ. Малтанрах яла янӑ кашни ҫырӑвӗнчех хамӑр ялсене хӑйсем патне пурӑнма чӗнетчӗҫ тет. Ҫимон Гурьянччӑ Яккупа юлташӗсене питӗ лайӑх хӑналаса янӑ. Хӑйӗн ачисене вара шуррисен ҫарне мобилизациленӗ пулнӑ.

Украинӑра Пӗчӗк Якку ***Кобрчаков Ефрем Егоровичпа*** (**37**) тата ***Кошкин Лука Ивановичпа*** пӗрле пулнӑ. Пӗр 1921 ҫ. вӗсем Махно тӑнӑ яла ҫавӑрса илеҫҫӗ. Унччен ҫеҫ кунтан Махно ҫыннисем туй туса тухса кайнӑ-мӗн. Ҫак ялта Лукка пӗр хӗрарӑм патне киле кӗрет, унтах юласшӑн пулать. Анчах командир ӑна хӑвармасть, халь вӑрҫӑ, юрамасть, тет. Лукка хӑй тата ялта, Польша разведчикӗсемпе пӗрле эрех ӗҫеттӗмӗрччӗ, тесе час-часах мухтанкаланӑ.

***Кольцов Иван Петрович*** (1897–1944, **7**, кайран **1** куҫнӑ) Деникина хирӗҫ пынӑ Царицын патӗнчи



Вырăс-турккă вăрçин пĕр саманчĕ

1877-1878 çç. çапăçусене аса илтерекен медаль





Таса Георгий медалĕ

Купанов Михаил Иванович (*21*, сулахайран пĕрремĕш тăрать) çарти юлташĕсемпе.



# I тĕнче вăрçин саманчĕсем



Позици йышăн-
ма каяççĕ



Çапăçу
хыççăн



Фронтран
таврăнни



Пĕрремĕш тĕнче вăрçинчи ентешсем. Казатин хуллинче (Украинăри Винница обл.) Клопов Н.Т. (картусăр тăраканни, **34**) пиччĕшĕ Петр патне ярса панă сăнӳкерчĕк.



Клопов Фома Яковлевич (тăрать, юлташĕ ларать).



Ярман вăрçинчи ентешсем, 1914ç. Кошкин Алексей Филиппович (**42**), Марасанов Ефим (Калайкасси) тата Рубцов Порфирий (Калайкасси).



Замятин Ефим Тимофеевич



Пĕрремĕш тĕнче вăрçи салтакĕсем: тăрать Кошкин Лука Иванович, ларать Долгов (Михаил-? Вускассинчен).



I тĕнче вăрçин ветеранĕ Голубев Деомид Наумович. Йăлăм, 1967ç. июль





23 тата 42 килсенче упранакан палласа илеймен салтаксен сăнӳкерчĕкĕсем

çапăçусене хутшăннă. Яла 1921 ç. ноябрьте тин таврăннă. Учета тăма вара Чикмене, Çармăс территорийĕ пулса тăнă хамăрăн малтанхи уес хулинех, кайнă.

***Клопов Павел Ефимовичпа*** (1899 ç.ç., **31**, хыççăн **29**) ***Замятин Иван Григорьевича*** (1899 ç.ç., **22**, хыççăн **25**) 1919 ç. çуркунне, ***Архипов Никита Филипповичпа*** (1900 ç.ç., Михти, **18**) ***Клопов Николай Яковлевича*** (1900–1974, **33**, кайран **26**) 1919 ç. çулла Хĕрлĕ Çара пуçтарса кайнă. Кăнтăр фронтĕнче çапăçаççĕ. Вĕсенчен Замятин И.Г. тата Архипов Н.Ф. çав вăрçăра пуçне хураççĕ.

***Фомин Василий Николаевич*** та (1901–1964, **39**, кайран **27**) çамрăклах Граждан вăрçине лекет. Унăн кӳршисем ***Кобрчаков Иван Степанович*** (**38**) тата ***Голубев Кузьма Трофимович*** (1890 ç.ç., **36**) вара çак вăрçăран таврăнаймаççĕ. Кобрчаков И.С. Чурикассинчи Палеев Куçокпа пĕрле пĕр снаряд айне пулса Воткинск патĕнче (Удмуртире) вилнĕ. ***Кушманов Данил Петровичпа*** (1892–1933, **17**) пиччĕшĕ ***Горланов (Кушманов) Ефим Петрович*** та (1889–~1956, **17**, кайран **14** киле кĕнĕ) çак вăрçăра çӳренĕ. Горланов Е.П. тимĕрçĕ ĕçне пĕлекенскер пăрахут çинче слесарь пулнă, Хусанта вĕсен чылай вăхăт лаша ашĕпе çеç пурăнма тивнĕ тетчĕç.

Скворцов Иван Петрович (1896–1993) каласа панинчен: «1918 ç. кĕркунне Граждан вăрçине Калайкассинчен эпир 23 çамрăк тухса кайрăмăр. Оренбург таврашĕнчи пĕр ял çывăхĕнче казаксемпе хаяр çапăçу пулса иртрĕ. Вăл яла эпир шуррисенчен тасатнăччĕ, анчах вăйсем сахалрах пулнипе пирĕн чакма тиврĕ. Çавăн чухне хамăр ялти М. Горбунов аманнипе юр çине хиртех выртса юлчĕ, пирĕн ăна пĕрле илсе тухма май килмерĕ. Тепĕр кунне çав яла илнĕ чух çеç ăна шыраса тупрăмăр. Унăн çинче нимле тумтир те çукчĕ, ялтисем пĕтĕмпех хывса кайнă».[4]

Степанова (Гришкина) Мария Григорьевна (1910–1997, **38**) каласа панинчен: «Граждан вăрçи чухне пирĕн (Карамалькассинче) «Шустрый» лаша пулса. Ăна вăрçа тытса кайса. Вара вăл çавăнтан, темле майпа-çав, тарса килсе-иç. Топ! топ! таккать паччалăка. Кам тесе тохса уçрăмăр. Кайран, тепĕр эрнерен ăна командир илсе кайрĕ. Атти мăйĕнчен ыталаса тепĕр хут ăсатрĕ...

Граждан вăрçинче Павăл Иванччăн хоньстарикĕ, Толстов Караççăм шăллĕ, вилсе. Çпиритон мучин икĕ ывăлĕ, пире хирĕç пурăннă Иллепе Иван, вăрçа тухса кайса. Çитăр мучи (Смеловсен) икĕ улĕ, Порфири, Данила Гришкинсем… Оккань мучин (Бычковсен) асли, Иван, вăл питĕ юрă ăсти пулса, салтак кайнă чухне мĕн май хуçкаланса юрларĕ! Мясников Саньккисен икĕ ывăл: Толя, … – иккĕш те килмерĕç. Хамăра хирĕç Хеток Илли вилсе çавăнта. Стрельцов Иван ачисем граждан вăрçинче вилсе…»

Граждан вăрçи чухнехи ялти тепĕр саманта аса илнинчен: «Эх, çак Çĕнойра лашапа ыраш таптаса салтаксем чупаççĕ! Станъялти Пăкоти Михти улĕ Сергеев Кермăнсен (Карамальти хĕрринчи кил) ампарĕ айне кĕрсе выртнă пулнă. Вара çавна прикладсемпе çапса кăларса илсе кайрĕç. Вăл те шурри пулнă. Ăна кайран курман».

1914-1922 çç. çĕршывра тăршшĕпех вăрçăллă ларутăру пулнăран хăшпĕрисене килĕсенче те çухатнă. Акă, Çĕлементи Карли (Кошкин Гаврил Андреевич) авланать, Карамальтан Гришкина Дарья Терентьевнăна каччă илет. Нумаях та пурăнаймасть, 1911 ç. тĕлĕнче ăна çара илеççĕ. Таçта та пулать, тем те курать. Ялта вара унтан нимле хыпар та пулман, вăл сывви-чĕррине те никам пĕлмен. Вунпĕр çултан тин яла таврăнать, мăшăрне кĕтсе илнĕшĕн ĕмĕрĕпе тавтуса пурăнать. Вĕсен ывăлĕ Отечественнăй вăрçăра вилнĕ.

Торайри Астров Иван Александровича (1896–1967) 1915 ç. çара илнĕ. 1916 ç. февральте вĕсен ятарлă пехота бригадине, патша хушăвĕпе, нимĕçсемпе çапăçма Францие яраççĕ. Çĕпĕр, Маньчжури урлă кайнă, тепĕр икĕ уйăх – карап çинче. Çитсен Реймс хули патĕнче позици йышăнаççĕ. Пысăк çухатусем тӳсеççĕ. Бримон таврашĕнче те нимĕçсемпе çапăçаççĕ. Раççейри революци çинчен илтнипе 1917 ç. çуркунне вĕсем çапăçма пăрахаççĕ. Франци влаçĕсем вĕсене хĕçпăшалсăрлантараççĕ те лагерьте тытаççĕ. Ноябрьте вара Вăтаçĕр тинĕсĕ урлă Алжир Сахарине кайса яраççĕ, чурасем пек усраççĕ. Сăртлă-туллă Ле-Крейдер пушхирте мăшкăлласа асаплантарнă хыççăн вырăс салтакĕсене Атлас тăвĕсем патĕнче тытнă. 1920 ç. августра тин вĕсене Алжиртан илсе тухаççĕ, Итали карапĕсемпе Одессăна илсе килеççĕ. Астровпа юлташĕсенчен кунта чекистсен 115 уйрăм батальонне йĕркеленĕ, Украинăра Совет влаçне тума хутшăнтарнă.[5]

Ытахальтен, тыткăна лекнисемпе вăл вăхăтра çыхăну тытма, пĕтĕмĕшле, май килнĕ. Хут пĕлнисем пĕр-пĕрин патне çыру çӳретни те пулнă.

Яраккасси малтанах 2 Кĕнер, хыççăн Калайкасси, юлашкинчен Яраккасси ял обществисене кĕнĕ. 1865 çултанпа пирĕн ял Хусан кĕпĕрнин Чикме уесĕнчи Сĕнтĕр вулăсĕнче (центрĕ Ишлейра пулнă) шутланнă. 1920 ç. Чăваш автономи облаçне (кайран Чăваш АССР) туса хурсан Сĕнтĕр вулăсне Шупашкар уесне куçараççĕ. Чикме хули вара Мари автономине кĕрет. Çавах 1923 çулччен халăхшăн пĕлтерĕшлĕ чылай учреждени кунти чăвашсемшĕн Чикмерех пулнă. 1927 çултанпа пирĕн ял Сĕнтĕр районĕнче (центрĕ Мăн Сĕнтĕр ялĕ), 1963 çулччен, шутланнă. Пĕр вăхăт ăна, 1927-1939 çç., Тутаркас районĕ тенĕ. Калайкасси сельсоветĕнче пулнă.

# II Çĕнтерĕве ĕçре туптанă



Клопов Герасим Ефимович (**31**) тата Щербаков Емельян Илларионович (**12**). 3.09.1933 ç.



Малта лараççĕ: 1)Мăн Сĕнтĕр сельсовечĕн пуçлăхĕ Воробьев А., 2)Мăн Сĕнтĕр сыватăшĕн врачĕ, 3)Мăн Сĕнтĕр сельпо магазинĕн заведующийĕ Замятин Степан Григорьевич (25); хыçалта: 4)Горт магазинĕн заведующийĕ Варюхин, 5)салат завочĕн заведующийĕ Ильгечкин. 25.05.1932



Калайкасси çамрăкĕсен пухăвĕ. Варринче Голубева Вера Кирилловна учительница ларать. Шкул умĕнче, 1.09.1928



ЧАССР Тутаркас районĕнчи «Победа» колхоз (Яраккасси) ĕçченĕсем йĕтем çинче (29 кил выртăнĕнче пулнă) авăн çапнă чух (1933 ç. сентябрь) малта лараççĕ: 1)Измайлов Василий Корнилович (Карамаль), 2) Кобрчакова Матрена (1862 ç.ç., Якор арăмь, **37**), 3) Клопова Зоя Алексеевна (1907-1985, Сони, **20**), 4)Клопов Степан Иванович (1912-1953, **33**), 5)Щербакова Мария Ефремовна (1896-1983, Михала арăмь, **11**) аллинчи 6)Фаина ятлă хĕрĕпе (1930-2007), 7)Щербаков Михаил Илларионович (1912 ç.ç., Ăртиван Мишши, **12**), 8)Щербаков Михаил Федорович (1891-1948, Шăрпăк Михали, **11**), 9)Смелов Иван Яковлевич (1889-1967, **45**), 10)Кошкин Петр Алексеевич (1915-2000, **42**), 11) Клопов Иван Сергеевич (1879-1952, **33**), 12) Клопова Матрена Матвеевна (1907-1982, Якку арăмь, Раман арăмь, **32**), 13) Мартьянова Елена Осиповна (1915-1975, Елян, **40**); вĕсем хыçĕнче лараççĕ: 14)Мясникова Екатерина Спиридоновна (1890-1965, Михала арăмь, **43**) аллинчи 15)Зоя ятлă хĕрĕпе (1930 ç.ç., 16)Клопов Никита Федорович (1866-1947 Михти, **16**), 17)Кобрчаков Ефрем Егорович (1890-1937, Ехрем, **37**), 18)Клопова Марина Никитична (1914-2004, Марни, **16**), 19)Кобрчакова Мария Степановна (1916-2009, **38**), 20)Кобрчаков Евстафий Ефремович (1915-1993, Ястахви, 37); хыçалта тăраççĕ: 21)Замятина Екатерина Осиповна (1896-1982, Шўр Еххĕм арăмь, **22**), 22) Кобрчакова Анна Петровна (Ехрем арăмь, **37**), 23)Кошкина Перасковья Никитична (1884 ç.ç., Элекçи арăмь, **42**), 24)Смелова Анна Захаровна (1901-1979, Çмолох арăмь, **45**), 25)Мартьянов Оçăпăн 2-мĕш арăмĕ (**40**), 26)Замятин ЕфимТимофеевич (1886-1951 ç.ç., Шўр Еххĕм, **22**), 27)Сорокин Иван Никитич (1914-199., **30**), 28)Мясников Прокопий Михайлович (1914-1995, Прокох, **43**), 29)Клопова Акулина (Клоппох арăмь, Кольох, **33**), 30)Кошкина Вера Алексеевна (1912-199 , Верок, **42**), 31)Кобрчакова Ирина Степановна (1907-1993, Орина, **38**); чи хыçалта улăм çинче: 32)Щербаков Емельян Илларионович (1906-1939, Емелен, **12**), 33)Клопов Яков Трофимович (1890-1933, Якку, 32), 34)Кольцов Иван Никитич (1912-1935, **3**).



Карамалькасси шкулӗнчи 2 класс ачисем. 1932 çул. Яраккассинчи Клопов П.Т. (**9**) пӳртӗнчен тунăскер



Калайкасси шкулĕ, 6 е 7 класс. 1930 çç. пуçламăшĕ. Сулахай-ра 1-мĕш Чашкин Роман Е. (**10**) (ларать, хыçалта сылтăмран 3-мĕш Калайкассинчи Мартьянов (Степенко) Валерий Д. тăрать



Калайкасси шкулĕ. Варринче класс ертӳçи
Иванов Степан Иванович (1912-1953, **33**)



Калайкасси шкулĕнче
вĕрентекен Замятин Ф.Г. (**25**)
тата Клопов Г.Е. (**31**) 1938 ç.



Чăваш радиовĕпе юрлама Шупашкара лашасемпе çитнĕ Яраккасси çамрăкĕсем.

1935ç. хĕлле. Малта лараççĕ: Смелов Александр Иванович (**46**), Замятина Екатерина Ефимовна (**22**), Клопова Валентина Ивановна (**33**), Горланова Кристина Ефимовна (14); иккĕмĕш ретре лараççĕ: Клопов Герасим Ефимович (**31**), Замятин Федор Григорьевич (**25**), Кушманова Мария Герасимовна (**7**), Мартьянова Елена Осиповна (**40**), Клопова Пелагея Петровна (**9**), Горшкова Агафия Андрияновна (**5**), Клопова Марина Никитична (**16**), Смелова Пелагея Ивановна (**45**); хыçалта тăраççĕ: ялти колхоз ертӳçи Смелов Иван Яковлевич (**45**), Щербаков Емельян Илларионович (**12**), Голубев Павел Семенович (**36**), Кобрчаков Сергей Ефремович (**37**), Кошкин Андрей Алексеевич (**42**), Кошкин Петр Алексеевич (**42**), Кобрчаков Евстафий Ефремович (**37**), Щербаков Михаил Илларионович (**12**), Кошкин Павел Алексеевич (**42**). Тепĕр ултă çултан пуçланнă вăрçă вĕсен пурнăçне самай улăштарать.



Калайкасси шкулĕ, 1930 çç.



Калайкассинче пуçламăш классенче вĕренекенсем, 1939 ç. Учителĕ Романов С.Ф. (Хораçкаран)



Москакасси шкулĕн вăрçă умĕнхи учителĕсем: 1)Волков Антон Филиппович, 2)Соловьев Георгий Степанович, 3)Исаев Григорий Павлович, 4)Клопова Пелагея Петровна, 5)Андреева Зоя Михайловна, 6)Целищева Зоя Тихоновна. 1941 ç. апрель



Калайкасси шкулӗнчи 5 класс. Кунта пур: Яраккассинчи Клопова Зинаида Николаевна (1927-2010), Клопова Мария Семеновна, Чурикассинчи Иванова Аннушка (учитель умӗнче, кайран Яракри Смелова А.), Морозов, ун ҫумӗнче Риккакассинчи Пирусов Петр. Учителӗ Толстов. 1941 ҫ.



Сӑр хӗрринче окоп чавни, 1941-1942 ҫ. хӗлле



Калайкасси, 12.05.1943 варринче Петров Н.Г. (7)
тата шкулти учительница лараççĕ



1937 ç. суйлав валли хатĕрленĕ яраксен списокĕ[6]

| № | Суйлавçă ячĕ | Хăçан çуралнă | Кил № |
|---|---|---|---|
| 1. | Кольцов Иван Петрович | 15.01.1897 | 1 |
| 2 | Кольцова Ирина Тихоновна | 5.05.1898 | 1 |
| 3. | Кольцова Вера Андрияновна | 7.09.1919 | 2 |
| 4. | Кушманова Мария Григорьевна | 22.03.1884 | 3 |
| 5. | Кушманова Июлия Никитична | 9.10.1919 | 3 |
| 6. | Фролова Пелагея Никифоровна | 16.01.1881 | 4 |
| 7. | Фролов Пантелеймон Сергеевич | 4.08.1902 | 4 |
| 8. | Горшкова Степанида Ивановна | 2.05.1887 | 5 |
| 9. | Горшкова Анна Андреевна | 21.11.1914 | 5 |
| 10. | Горшкова Агафия Андреевна | 2.02.1917 | 5 |
| 11. | Кольцов Яков Игнатьевич | 21.10.1895 | 6 |
| 12. | Кольцова Фекла Максимовна | 1.10.1898 | 6 |
| 13. | Петрова Дария Филипповна | 17.03.1882 | 7 |
| 14. | Петров Николай Герасимович | 19.12.1915 | 7 |
| 15. | Петрова Мария Герасимовна | 20.07.1919 | 7 |
| 16. | Чашкин Николай Данилович | 6.12.1880 | 8 |
| 17. | Чашкина Мария Петровна | 25.03.1881 | 8 |
| 18. | Чашкин Григорий Николаевич | 10.03.1904 | 8 |
| 19. | Чашкина Ксения Андреевна | 12.09.1907 | 8 |
| 20. | Чашкина Екатерина Николаевна | 8.11.1918 | 8 |
| 21. | Клопов Петр Тихонович | 10.12.1885 | 9 |
| 22. | Клопова Дария Николаевна | 3.03.1887 | 9 |
| 23. | Клопов Иван Петрович | 25.02.1915 | 9 |
| 24. | Чашкина Елизавета Александровна | 5.10.1890 | 10 |
| 25. | Егоров Роман Егорович | 23.09.1918 | 10 |
| 26. | Щербаков Михаил Федорович | 8.11.1891 | 11 |
| 27. | Щербакова Мария Ефремовна | 17.08.1897 | 11 |

| | | | |
|---|---|---|---|
| 28. | Щербаков Михаил Илларионович | 5.10.1912 | 12 |
| 29. | Щербакова Вера Алексеевна | 12.10.1912 | 12 |
| 30. | Щербакова Евдокия Яковлевна | 4.03.1863 | 13 |
| 31. | Щербаков Николай Федорович | 17.11.1897 | 13 |
| 32. | Щербакова Александра Порфирьевна | 17.03.1907 | 13 |
| 33. | Горланова Надежда Васильевна | 1.10.1886 | 14 |
| 34. | Горланова Клавдия Петровна | 5.09.1901 | 14 |
| 35. | Замятина Евдокия Андреевна | 4.03.1905 | 14 |
| 36. | Кобрчаков Андриян Емельянович | 26.08.1887 | 15 |
| 37. | Кобрчакова Екатерина Григорьевна | 18.12.1889 | 15 |
| 38. | Клопова Мария Ефимовна | 20.07.1873 | 16 |
| 39. | Клопов Николай Федорович | 28.09.1887 | 16 |
| 40. | Клопова Марина Никитична | 8.07.1914 | 16 |
| 41. | Кушманова Варвара Федоровна | 4.12.1893 | 17 |
| 42. | Архипова Татьяна Илларионовна | 12.01.1872 | 18 |
| 43. | Архипов Григорий Филиппович | 8.12.1902 | 18 |
| 44. | Архипова Матрена Никитична | 27.11.1909 | 18 |
| 45. | Наумов Емельян Наумович | 27.08.1897 | 19 |
| 46. | Голубев Алексей Наумович | 17.03.1902 | 19 |
| 47. | Голубева Вера Григорьевна | 29.09.1915 | 19 |
| 48. | Клопова Ефимия Терентьевна | 12.07.1877 | 20 |
| 49. | Щербаков Емельян Илларионович | 20.07.1906 | 20 |
| 50. | Щербакова Зоя Алексеевна | 3.02.1907 | 20 |
| 51. | Купанова Ефимия Антиповна | 15.07.1865 | 21 |
| 52. | Купанов Артем Иванович | 3.11.1907 | 21 |
| 53 | Купанова Анна Филипповна | 7.01.1906 | 21 |
| 54 | Замятин Ефим Тимофеевич | 25.03.1886 | 22 |
| 55 | Замятина Екатерина Осиповна | 24.11.1895 | 22 |
| 56. | Ярхинов Данил Михайлович | 13.01.1872 | 23 |
| 57. | Ярхинов Гурий Данилович | 15.10.1919 | 23 |

| | | | |
|---|---|---|---|
| 58. | Замятин Николай Григорьевич | 18.07.1906 | 24 |
| 59. | Замятина Агафия Степановна | 15.02.1894 | 24 |
| 60. | Замятин Степан Григорьевич | 19.08.1909 | 25 |
| 61. | Замятина Татьяна Тарасовна | 1.01.1876 | 25 |
| 62. | Замятина Фекла Савельевна | 3.05.1918 | 25 |
| 63. | Замятин Федор Григорьевич | 15.01.1912 | 25 |
| 64. | Замятина Евдокия Ефимовна | 4.03.1915 | 25 |
| 65. | Клопов Николай Яковлевич | 6.12.1900 | 26 |
| 66. | Клопова Наталия Николаевна | 26.08.1900 | 26 |
| 67. | Фомин Василий Николаевич | 26.02.1902 | 27 |
| 68. | Фомина Агафья Васильевна | 6.03.1906 | 27 |
| 69. | Ярхинов Павел Данилович | 7.11.1903 | 23 |
| 70 | Ярхинова Евдокия Федоровна | 25.02.1906 | 23 |
| 71. | Клопов Павел Ефимович | 15.01.1899 | 29 |
| 72. | Клопова Василиса Ефимовна | 8.01.1903 | 29 |
| 73. | Замятин Василий Тимофеевич | 25.12.1871 | 30 |
| 74. | Замятина Гликерия Андреевна | 15.09.1875 | 30 |
| 75. | Сорокин Иван Васильевич | 9.04.1914 | 30 |
| 76. | Сорокина Мария Матвеевна | 8.07.1909 | 30 |
| 77. | Клопова Екатерина Ефимовна | 24.11.1872 | 31 |
| 78. | Клопова Матрена Григорьевна | 20.11.1896 | 31 |
| 79. | Клопов Герасим Ефимович | 28.02.1906 | 31 |
| 80. | Клопова Мария Ефимовна | 18.03.1917 | 31 |
| 81. | Клопова Ефимия Федоровна | 18.09.1918 | 31 |
| 82. | Мочалов Роман Григорьевич | 6.12.1907 | 32 |
| 83. | Мочалова Матрена Матвеевна | 30.11.1906 | 32 |
| 84. | Клопов Иван Сергеевич | 20.01.1878 | 33 |
| 85. | Клопова Акулина Петровна | 31.05.1882 | 33 |

| | | | |
|---|---|---|---|
| 86. | Иванов Степан Иванович | 21.12.1912 | 33 |
| 87. | Клопова Ирина Павловна | 10.04.1884 | 34 |
| 88. | Клопова Анастасия Дмитриевна | 6.12.1888 | 34 |
| 89. | Клопова Федосия Семеновна | 9.05.1912 | 34 |
| 90. | Клопов Арсений Семенович | 1914 | 34 |
| 91. | Голубева Татьяна Федоровна | 17.06.1880 | 35 |
| 92. | Голубев Трофим Леонтьевич | 12.04.1912 | 35 |
| 93. | Голубева Анна Сергеевна | 12.03.1910 | 35 |
| 94. | Голубев Семен Наумович | 25.01.1883 | 36 |
| 95. | Голубева Александра Николаевна | 23.05.1889 | 36 |
| 96. | Голубев Павел Семенович | 2.01.1918 | 36 |
| 97. | Коборчаков Ефрем Егорович | 17.07.1890 | 37 |
| 98. | Коборчакова Анна Андреевна | 30.03.1890 | 37 |
| 99. | Егоров Евстафий Ефремович | 22.02.1915 | 37 |
| 100. | Коборчаков Александр Степанович | 13.08.1910 | 38 |
| 101. | Коборчакова Мария Григорьевна | 10.02.1910 | 38 |
| 102. | Коборчакова Мария Степановна | 1.10.1913 | 38 |
| 103. | Фомин Яков Николаевич | 16.10.1909 | 39 |
| 104. | Фомина Ирина Васильевна | 12.02.1912 | 39 |
| 105. | Мартьянов Осип Маркович | 9.04.1880 | 40 |
| 106. | Мартьянова Наталия | 26.08.1891 | 40 |
| 107. | Мартьянов Григорий Осипович | 5.04.1912 | 40 |
| 108. | Мартьянова Елена Осиповна | 5.05.1915 | 40 |
| 109 | Мартьянова Ксения Степановна | 10.04.1916 | 40 |
| 110. | Кошкин Лука Иванович | 8.10.1898 | 41 |
| 111. | Кошкина Фекла Алексеевна | 15.09.1898 | 41 |
| 112. | Алексеев Павел Алексеевич | 27.12.1918 | 42 |
| 113. | Кошкина Прасковья Никитична | 15.09.1884 | 42 |

| | | | |
|---|---|---|---|
| 114. | Кошкин Петр Алексеевич | 20.09.1915 | 42 |
| 115 | Кошкин Андрей Алексеевич | 20.09.1915 | 42 |
| 116. | Кошкина Христиния Михайловна | 13.04.1915 | 42 |
| 117. | Мясникова Екатерина Спиридоновна | 11.12.1879 | 43 |
| 118. | Мясников Прокопий Михайлович | 3.06.1914 | 43 |
| 119. | Голубев Петр Трофимович | 29.07.1880 | 44 |
| 120. | Голубева Мария Григорьевна | 13.09.1884 | 44 |
| 121. | Голубева Мария Петровна | 20.06.1816 | 44 |
| 122. | Смелов Иван Яковлевич | 1.11.1889 | 45 |
| 123. | Смелова Анна Захаровна | 2.02.1901 | 45 |

## Тылри канăççăр пурнăç

Аслă Отечественнăй вăрçă пирĕн халăх, çĕршыв кунçулĕнче ĕмĕрсем хушши асра юлмалли пулăм пулса юлчĕ. 1941-1945 çç. миллионшар вилĕм, уксах-чăлахпа чирлисем, капашсăр аркану, выçăллă çитмен пурнăç, çӳлти тискер хушусемпе каппайчăк сăмахсем чылай вăхăт хăйсем çинчен мантармĕç. Пур совет çыннипе пĕрле пирĕн Яраккасси ялĕ те çакна туллин тӳссе ирттернĕ. Ун чух вăл Чăваш АССРĕн Сĕнтĕр районĕнчи Калайкасси сельсоветĕнче шутланнă.

Вăрçă урапи ялти пĕтĕм киле, кашни çынна хăй тавра çавăрттарнă. Пурнăç тытăмĕ авалхи чуралăх тапхăрĕнчен пĕрре те кая пулман пулĕ. Кунĕн-çĕрĕн ĕçлесе тырпула, выльăх-чĕрлĕх продукцине патшалăха тӳлевсĕр тенĕ пекех панисĕр пуçне ялйыш çар ĕçне, вăрман касма, торф кăларма, тĕрлĕ стройкăсене, ытти ĕçсене тума хутшăннă. Ачасене те, 12 çултан пуçласа, çăмăллăх паман. Вăрçă çулĕсенче тата ялта техника хатĕрĕсем те пачах пулман темелле. Лашасене çуррине ытла фронта ăсатнă, ахальтен мар вăкăрсене кӳлме тивнĕ. Вăрçăн

малтанхи çулĕсенчех сутлăхра тăвар, супăнь, краççын, спичкă т.ыт.тавара пĕтернĕ. Çити-çитми пурнăçпа пурăнса ялти çынсем тĕрлĕ чирсене кĕрсе кайнă. Пыйтă, хăнкăла, пăрçа, кĕçĕ, тиф, трахома вăй илнĕ. Пур-çук апат-çимĕçе пула вар-хырăм чирĕсем анлă сарăлнă.

Малтанах колхозра 50 лаша, вĕсенчен 33 кӳлмелли шутланнă. Хăшпĕрисен ячĕсем: Олччок, Карăш, Пурлă т.ыт.те. Колхоз ертӳçинче çара кайиччен тата хыççăн (1949 ç. февральччен) Смелов И.Я. ĕçленĕ, 11.1941–03.1942 çç. – Фомин В.Н. (**27**, унччен виçĕ çул бригадир пулнă), 1942-1943 çç. – Сорокин И.Н. (**30**). Пĕр вăхăт Щербаков М.Ф. (**11**) та ертсе пынă. Бригадирта ытларах салтака каймалли каччăсем чупнă.

Анăçра Хĕрлĕ Çар пысăк çухатусем тӳссе Мускав таранах чакса килнĕрен 1941 ç. октябрь уйăхне пирĕн çĕршывăн фронтри стратегиллĕ лару-тăрăвĕ япăхланса çитет, тăшман шалалла татах кĕрсе каяс хăрушлăх тухса тăрать. Çакна шута илсе Патшалăх оборона комитечĕ (ГКО) 13.10.1941 Хӳтĕлевсен строительствин тĕп ертӳлĕхне (ГУОС) туса хурать, икĕ хӳтĕлев (оборонительная) линийĕ тума палăртаççĕ. Пĕрремĕш линийĕ Онега кӳллинчен пуçласа, Ока, Дон юханшывĕсем çумĕн Азов тинĕсĕ таран тăсăлнă. Иккĕмĕш хӳтĕ лев линийĕ Атăл тăрăх, Чулхуларан пуçласа Астрахань таран, кайнă. Иккĕмĕш линин пĕр рубежĕ Чăвашъенче Сăр ку енĕпе кайнă, тепĕр рубежĕ Сĕве ку енĕпе – Куславкка, Вăрмар, Тăвай районĕсем урлă – выртнă. Пирĕн енчи халăха Сăр çинчи хӳтĕлеве хатĕрлеттернĕ: «Сурский оборонительный рубеж». Етĕрне, Сĕнтĕр, Советски тата Элĕк районĕсем «1 военно-полевое строительство» шутĕнче Засурскинчен пуçласа Пантьăк ялĕ таран ĕçленĕ. Çакăнти пур ĕçе çар инженерĕсемпе парти секретарĕсем ертсе пынипе ялсенчи халăх пурнăçланă. 30-40 градус сивĕре, çур метр таран шăннă çĕре тем



Çор мăнкон чухнехи (мăнкунтан 20 кун, аслă çимĕкчен 4 эрне) хĕрсем (18.05.1951), 1)Мартьянова Е.О. (**40**), 2)Голубева К.П. (**44**), 3)Фомина Л.В. (**27**), 4)Мясникова З.М. (**43**), 5)Щербакова Ф.М. (**11**), 7)Замятина М.Н. (**24**), 8)Волкова А.Е. (Карамаль), 9)Купанова Н.А. (**21**)

Кӳршĕсем (1960 ç.ç.): 1)Павăл арăмĕ (**29**), 2)ывăлĕ Валерьян (**29**), 3) Николай Яккăлччă (**26**), 4) арăмĕ Краххина (**26**)





Поскилсем: Чашкина Екатерина Николаевна (**8**), Чашкина Елизавета Александровна (**10**), Щербакова Мария Ефремовна (**11**), Щербакова Раиса Михайловна (**11**). 1961 ç. август.



Тыл ĕçченĕсем: Данилова Ольга Григорьевна (1925–2003, **17**), Семенова Евгения (Кĕрекаç), Щербакова Зоя Алексеевна (**20**). 1978 ç.



(Клопова) Валентина Ивановна (1923-1997, **33**) мăшăрĕпе Исаев Максим Дмитриевичпа (1917-1995) тата пĕрремĕш ачипе Георгийпе (1947-2009). Апчар, 15.06.1947



1)Клопов Валерьян (**29**), 2)Смелов А.И. (**45**), 3)Кошкин А.Л. (**41**), 4)Ярхипов Г.П. (**28**), 5)Голубев П.С. (**36**), 6)Иванов Геннадий (**31**). 1950 çç. варри



Калайкасси клубне суйлава килнĕ Ярак хĕрĕсем (1949 ç.): 1)Клопова Мария Семеновна (**34**), 2) Фомина Любовь Васильевна (**27**), 3) Клопова Зинаида Николаевна (**26**).



Вăрçă нушине тӳссе ирттернĕ ăру: 1)Никитин Александр Осипович (Карамаль), 2)Фомин Александр Васильевич (1932–1989, **27**). 1950 çç.



Калайкассисем. Лараççĕ: 1)Рубцов Семен Егорович, 2)Ершов Геннадий Иванович; тăраççĕ: 3)Воронова, 4)Скворцова Екатерина Андреевна, 5)Клопова Елена Ефимовна (**33**). Калайкасси, 1949 ç.



Калайкассинчи Ярусов Василий Тимофеевичпа Горланов Григорий Лазаревич (1886-1971)кўршĕсем.



Карамальсем (1960 çç.): 1) Краснов Георгий Иванович, 2)Пайков Федор Яковлевич, 3) Портнов Алексей Филиппович (1930-1970).



Райцентра (Мăн Сĕнтĕре ) аннă тĕлти çула юсама «Коммунизм» колхозран кайнă бригада (1950 çç. пуçламăшĕ). Малта лараççĕ: 1)Вазикова Феодосия Дмитриевна (Карамаль), 2)Щербакова Фаина Михайловна (**11**), 3) бригадир Калинин Алексей Михайлович (Карамаль), 4) 3-ш хыçĕнче, 5)Антон Васли хĕрĕ Олькуш (Карамаль), 6) Соловьев Элекçи (Карамаль), 7)Смелов Куçма Васли (Карамаль), 8) Измайлов Васли (Карамаль)-?, хыçалта (икĕ рет) тăраççĕ: 9)Иванова Вальккӑ (Карамаль): 10)Клопова Таисçи (**26**), 11)Мясникова Зойккӑ (**43**), 12)Волкова Августа , 13)Григорьева Отатти (Карамаль), 14) , 15)Марек аккăшĕ Люба (Карамаль)-?, 16)Вазикова Раиса И., 17), 18)Рубцов Владимир Егорович (Калайкасси).



Отта кайма тапраннă Яраккасси бригади (1963 ç.). Малти ретре: 1)Сорокина Рита (**29**), 2)Клопова Зина (**26**), 3)Чашкина Олимпиада (**10**), 4)Ярхинова Марфа (**28**), 5)Голубева Роза (**19**), 6)Иванова Матрена (Карамаль), 7)Иванова Екатерина (Карамаль), 8)Кольцова Ирина (**6**), 9)Клопова Мария (**34**), 10)Щербакова Сони (20), 11)Ильина Клена (**14** е **2**), 13)Замятина Луккари (**25**); хыçалта: 14)Щербаков Георги (**11**), 15)Фомин Коля (**27**)-?, 16)Хветĕр арăмь (**25**), 17)Клопов Миша(**29**), 18)Ильин Шурккă (**14** е **2**), 19)Замятин Володя (**24**); шоферĕ Клопов Ваççут (**44**)



«Колос» колхозăн 2 (Яраккасси) бригади йăлăма утă çулма кайсан (1962 ç. июль), 1)Çмолох арăмь (1901-1979, **45**), 2)Петров Коля (1915-2005, **7**), 3)Çтаппан Иванччă арăмĕ (1913-1979, **33**), 4)Павăл (1918-1980, **36**), 5)Хĕветĕр арăмь (1915-1982, **25**), 6)Синови (1923-2007, **7**), 7)Сорокин (1914-1989), **30)**, 8)Каттӳç (1926 ç.ç., **44**), 9)Олимппа (1925-1998, **10**), 10)Кермăн (1932-1974), **22**), 11)Прокох арăмь (1916-1994, **43**), 12)Кермăн арăмĕ (1939 ç.ç., **22**), 13)Фомина Аля (1939 ç.ç., **27**), 14)Караççăм арăмь (1918- 1991, **31**), 15)Купанова Юля (**21**), 16)Лукка Санькка арăмь(**8**), 17)Элекçи Ваççут арăмь (1936-2008, **19**).

тарӑнӑш чавса тӑшман танкӗсем, техники каҫмалла мар лакӑм-урсем, окоп-траншейӑсем, ҫӗрпӳртсемпе блиндажсем, дзотсем, тупӑ-минометсем курӑнмалла мар выранӑсем т.ыт. хатӗрленӗ. Кашни сельсовета, колхоза хӑйне уйрӑм лаптӑк виҫсе панӑ. Чавакансем унтах пурӑннӑ, ҫывӑрнӑ. 1941-1942 ҫҫ. хӗлле хӳтӗлев ӗҫне пурнӑҫлама республикипе пурӗ ҫӗр пин ҫын ытла хутшӑннӑ. Ноябрь-январь уйӑхӗсенче уйрӑмах хытӑ, алӑ тупанӗнче юлнӑ сурансем пуличченех ӗҫленӗ. Мускав патӗнчен нимӗҫсене хӑваласа ярсан тин кунти халӑха салатса яраҫҫӗ. Мартра, пӗтӗмӗшле хӑрушлӑх чаксан, хӳтӗлев линийӗ тӑвас ӗҫ-пуҫа та пӑрахӑҫлаҫҫӗ.[7]

«Улахсем ларма пуҫлас чухне пире окоп чавма ячӗҫ. Ҫӑпата-тӑла сыртӑмӑр та, кам сӑхман, кам куфайккӑ тӑхӑнса кайрӑмӑр… Кунта ҫын кӗшӗлтетет кӑна, арҫын сахал. Шӑнса ларнӑ тӑпрана лумпа хиретпӗр, анчах вӑл шӑрпӑк курупки пысӑкӑшӗнчен ытла хӑйпӑнмасть-ҫке. Куҫ хӑрать те алӑ тӑвать. Ҫаплипех тарӑн окоп алтса ҫитертӗмӗр. Сӗвеклӗ вӗтлӗх вӑрманта блиндажсем, дотсем, дзотсем турӑмӑр…»[7]

Сӑр ҫинче пирӗн ялтан пӗр 25-30 ҫын ӗҫленӗ: Караҫҫӑм арӑмь (**31**), Хӗветӗр арӑмь (**25**), Сони (**20**), Онтри арӑмь (**42**), Раман арӑмь (**32**), Ортям арӑмь (**21**), Варвари (Танила арӑмь, **17**), Марни (**16**), Отатти (Пӑтӗк арӑмь, **4**), Миккола арӑмь (**13**), Якку арӑмь (**6**), Кӗтерин (**8**), Мари (**7**), Анна (**5**), Верок (**2**), Иван арӑмь (**1**), Прокох арӑмь (**43**), Ҫмолох арӑмь (**45**), Сорокин арӑмь (**30**). Кусемсӗр пуҫне тата Сорокин Йӑванӗ, салтака кайрантарах каймалли каччӑсем, эвакуаципе килнисем те пулнӑ. «Вӗсем ялтан тухса кайнӑ чухне юр ӳкмен. Пӗчӗк ачаллисене хӑварса. Хӑшпӗрисем кил хупсах кайса».

Ҫӗршыври кӑткӑс лару-тӑру Чулхулапа Шупашкара (Хусана) ҫыхӑнтаракан ҫула тӳрлетес, чулпа-асфальтпа хытарас ыйтӑва та ҫуратать. Ҫӗнӗ ҫула («военная дорога

4», халь Мăнçол е «Волга», «дорога М7» тетпĕр), сарлакăшĕ 4,5 м, 1942 ç. июньте тума пуçлаççĕ. Тĕрмесенчи халăха, тыткăнри нимĕçсене анлă явăçтараççĕ. Йывăр условисенче вĕсем йышлăн вилнĕ. Ытахальтен, кунта ĕçлекен зексен пĕр ушкăнне Калайкассинчи каланчаллă депора тытнă (ул. Центральная, 4-мĕшпе 6-мĕш килсем хушшинче 1980 çулччен ларнă). Вырăнти халăха та, сельсоветсене уйрăм нарядсем парса, ку ĕçе анлă хутшăнтарнă. Çак çул-йĕр ĕçне-хĕлне пĕтĕмпех НКВД тимленĕ, хăвăрт, васкавлă ĕçлеттернĕ.

Çул тума колхозран ятарласа хушупа янисем те пулнă. Çак хушупа Яраккассинчен унта Анна (**5**), Кĕтерин (**8**), Олимппа (**10**) тата тепĕр çын пĕр-икĕ çул уйрăлмасăр ĕçленĕ. Коля мучи (**7**): «Эп Онтиппа похха каяп. Лăп 12.07.1943 Калмăк тĕлĕнче çол пĕрлешсе». Правительство комиссийĕ çĕнĕ çула 17.10.1943 йышăннă.

Çара, промышленноçа çĕркăмрăкпа, нефтьпе т.ыт. энергоресурспа тивĕçтерекен тĕп районсене (Донбасс, Çурçĕр Кавказ) тăшман тытса илнĕрен çĕршывра йывăçпа, торфпа анлăрах усă курма тытăнаççĕ. Пирĕн ялти Мартьянова Елена (1915–1975, **40**), Чашкина Олимпиада (1925–1998, **10**), Карамальти Оххина (Гришкина Евфимия Даниловна), Мясникова Федосия Ивановна (1918–2001), Калайкассинчи Макань Нинни т.ыт. 1943-1944 çç. Иваново облаçĕнче выçăллă-тутăллă торф кăлараççĕ. Çăпата çеç сырнăскерсем чирленĕ, теприсем унти шурлăхсенчех юлнă. Мăнтарăн хĕрĕсем, выçăскерсем, таврăнасса та çуран, çул тăршшĕпе ыйткаласа, таврăннă.

Оринапа (1907–1993, **38**) темиçе хĕрарăма вăрман касма янă. Кунне пĕр çын пуçне икĕ кубметр вутă касса шаршанламалла пулнă вĕсен. Кайрантарах унта Таиççи те (1930–1997, **26**) лекнĕ.

Ялта вăрçă вăхăтĕнче, хыççăнах та, выçлăх хуçаланнă, уйрăмах 1944-1946 çç. Колхоз ячĕпе туса илнĕ мĕнпур

продукци çар валли тата хуласене кайнă. Хыççăн тата, 1943 çултан пуçласа ирĕке кăларнă облаçсене пулăшма тивнĕ. Тĕрлĕ займсене тӳлесе, танк-самолетсем тума пур-çук пурлăха хывса та ялйыш хăшкăлнă. Уйран е фермăран мĕн те пулин илсе кайсан, пĕртак пулин те, хытă айăпланă. Законсем ытла та çирĕп пулнă («Хам ĕнесем патĕнче завфермăра ĕçлесен те хăранипе, кăнтăрла çырткалама, сĕтне килтен çĕклесе»). Тырă кĕлечĕсене ватăрах арçынсене е аманса килнисене пăшалпах хураллатарнă. Ялти пур çын та ун чух хăйĕн анкартинчи çимĕçĕпе тăранса пурăннă, килти ĕçсене çĕрле, ирпе ирех пурнăçлама тивнĕ пулин те. Мăянпа çĕрĕк паранкă пашалăвĕ те киленĕç шутланнă. Чăтнă, çав, çын.

12.01.1942 тĕлне пирĕн Сĕнтĕр районĕнчи «Чăваш колхозникĕ» ятлă танк колонни тума 1 565 000 тенкĕ, «Чăваш тракторисчĕ» ятлă танк колонни валли 83 000 тенкĕ укçа пуçтарнă. 1942 ç. декабрьччен танксем тума татах тепĕр 91 440 тенкĕ пухса панă. Сăмахран, Калайкассинчи Воронов колхозник çак юхăма хутшăнса 12 пăт тырă панă. («Чăваш коммуни», 13.01.1942, 30.12.1942).

«Эпир, ача-пăча, вăрçă çулĕсенче, хыççăн та хамăр колхоз ĕçне май килнĕ таран хутшăнаттăмăр. Çимелли вара – тем, тутă пулнине астумастăп, яланах хырăм выçăччĕ. Пултран, серте, кăшкар вути, тем тĕрлĕ кĕпçе, ытти курăксем çиеттĕмĕр. Çитĕнекен кăшман, купăста, паранкă çеçки-çулçине яшкана яни, кĕркунне юлнă паранкăна уйра çуркунне çиме пуçтарни час-часах пулнă. Паян эпир вăл иртнĕ кунсене аса та илместпĕр, ун пирки калаçмастпăр. Калаçсан та, хамăрпа пĕр вăхăтрисем кăна ăнланма пултараççĕ. Çу кунĕсем уйрах иртнĕ: çумлаттăмăр, утă çулнă, типĕтнĕ, тырă вырнă. Ун чухне йывăр тесе çăвар уçса калаçакан та пулман».

«Пуçламăш классенче çеç вĕреннĕ пулин те апипе пĕрле колхоз ĕçне хутшăннă: çураки умĕн алăпа вăр-

лăх суйланă, тырри шăтса тухсан алăпа çумкурăксенчен тасатнă, вырма пуçлансан тырă вырнă, авăн çапнă, кĕлте туртнă. Кĕлтисене авăн вучаххинче типĕтетчĕç. Пире ачасене типĕтме шанатчĕç, типĕ кĕлтесене йĕтем çинче çапуççипе алăпа çапатчĕç».

Çапах хăрушă çулсем иртсен тылри халăхăн Аслă Çĕнтерӳри пархатарлă тӳпине тăван çĕршыв пысăка хурса хаклать. Вăрçă вăхăтĕнче ырми-канми ĕçленĕ чылай çын правительство наградине тивĕçнĕ. Пирĕн ялсем ытларах колхоз производствинче тар юхтарнипе палăраççĕ. Çав вăхăтрах завод-фабрикăсенче, çул-йĕр тунă çĕрте, вĕренӳ ĕçĕнче т.ыт. вырăнта пулнисене те чысланă. «За доблестный труд в Великой Отечественной войне. 1941–1945 годы» медале 24.11.1946 тата 18.03.1947 ЧАССР Сĕнтĕр районĕн райĕçтăвкомĕ (председателĕ Свешников И.Е.) йышăннипе ялти «Победа» колхозăн çак ĕçченĕсем тивĕçнĕ (наградăна Сĕнтĕр райĕçтăвком председателĕн çумĕ Кожаков И.Л. 30.10.1947 килсе панă)[8]:



| Район спискĕнчи № | Ячĕ-шывĕ | Удостоверени № | Хăш килтен |
|---|---|---|---|
| 6108 | Смелова Анна Захаровна | 248701 | 45 |
| 6109 | Мясникова Екатерина Спиридоновна | 248702 | 43 |
| 6110 | Кошкина Христина Михайловна | 248703 | 42 |
| 6111 | Замятина Евдокия Ефимовна | 248704 | 25 |
| 6112 | Фролова Евдокия Андреевна | 248705 | 4 |
| 6113 | Кушманова Юлия Никитична | 248706 | 3 |
| 6114 | Щербакова Александра Порфирьевна | 248707 | 13 |
| 6115 | Клопова Анастасия Ефимовна | 248708 | 29 |
| 6116 | Смелов Иван Яковлевич | 248709 | 45 |

| | | | |
|---|---|---|---|
| 6117 | Иванова Валентина Ивановна | 248710 | 33 |
| 6118 | Клопова Мария Никитична | 248711 | 16 |
| 6119 | Голубев Семен Наумович | 248713 | 36 |
| 6120 | Фролова Пелагея | 248714 | 4 |
| 6121 | Голубева Евдокия Петровна | 248712 | 44 |
| 6122 | Мясникова Екатерина Ильинична | 248715 | 43 |
| 6123 | Мартьянова Елена Осиповна | 248716 | 40 |
| 6125 | Степанова Мария Григорьевна | 248718 | 38 |
| 6126 | Егорова Серафима | 248719 | 37 |
| 6127 | Егоров Виталий Ефремович | 248720 | 37 |
| 6128 | Мочалова Матрена Матвеевна | 248721 | 32 |
| 6129 | Клопова Ефимия Федоровна | 248722 | 31 |
| 6130 | Фомина Агафия Васильевна | 248723 | 27 |
| 6124 | Мартьянов Осип Маркович | 248717 | 40 |
| 6131 | Замятина Гликерия Дмитриевна | 248724 | 25 |
| 6132 | Замятина Фекла Савельевна | 248725 | 25 |
| 6133 | Ярхинова Раиса Демьяновна | 248726 | 23 |
| 6134 | Ярхинов Григорий Павлович | 248727 | 23 |
| 6135 | Купанова Анна Филипповна | 248728 | 21 |
| 6136 | Щербакова Зоя Алексеевна | 248729 | 20 |
| 6137 | Голубева Вера Григорьевна | 248730 | 19 |
| 6138 | Кушманова Варвара Федоровна | 248731 | 17 |
| 6139 | Клопов Никита Федорович | 248732 | 16 |
| 6140 | Щербаков Михаил Федорович | 248733 | 11 |
| 6141 | Чашкина Ксения | 248734 | 8 |
| 6142 | Петрова Зинаида Алексеевна | 248735 | 7 |
| 6143 | Кольцова Фекла Максимовна | 248736 | 6 |
| 6144 | Кошкина Анна Ивановна | 248737 | 5 |
| 6145 | Кольцова Ирина Тихоновна | 248738 | 1 |
| 6146 | Кольцов Антип Иванович | 248739 | 1 |

# III. Тăван çĕршыв чĕнсе илсен

Пысăк вăрçă тапранасси пирки çĕршывра малтанах тĕрлĕ сас-хура çӳренĕ. Пур çĕрте те ун чух хавхалануллă, çĕнтерӳллĕ вăрçă юррисем янăранă, Çав хушăрах тата çамрăксене йышлăрах салтака илме пуçланă, хаçатсенче, радиора çара çирĕплетес, вăрçа хатĕрленес ыйтусене çине-çине хускатнă. Унта та кунта иртекен вăрçă-çапăçусем те халăх шухăш-кăмăлне çавна валли хатĕрленĕ. СССР-па Германи 1939 ç. туслăн килĕшсе Европăна пайлама йышăннă хыççăн пирĕн çĕршыв Бессарабие, Хĕвеланăç Украинăна, Хĕвеланăç Белоруссие, Литвана, Латвие, Эстоние çарсем кĕртсе ярса илет, Финлянди çĕрĕсене те çавăрса илме тытăнать. Çавăн чухнех Инçет Хĕвелтухăçĕнче Тува çĕршывне пăхăнтарать, Маньчжурие хапсăнма пăрахмасть. Çакна май вĕсенчи халăхсемпе те, тĕнчери общественноçпа та хирĕçтăрăва кĕрет. Паллах, кунпа пĕрлех питĕ вăйлă Германи интересĕсем улшăнма пултарассине те совет çыннисем туйнă. Тĕрĕссипе илсен, хăрушă вăрçă шурăмпуçĕ тĕнчипех курăннă ĕнтĕ, тăнăç пурăнакансене пăшăрхантарнă. Çав хушăрах пирĕн çĕршыври официаллă пропаганда ăна халăха палăртма тăрăшман е çăмăллатсарах кăтартнă.

Вăрçăн тепĕр кунне хăвăрт кăна районĕпе пуçтарнă, унччен çарта пулса курнă, 25-35 çç. арçынсен пысăк ушкăнĕ вăрçă хирне тухса каять. Вĕсем тăванĕсемпе йĕркеллĕ сывпуллашма та ĕлкĕреймеççĕ. Мобилизаци Законĕпе килĕшӳллĕн пирĕн Сĕнтĕр районĕнчен вăрçă пуçлансан тӳрех (23.06.-1.07.1941) унччен çарта пулнă 360 çын, 1905-1918 çç. çуралнисем, тухса кайнă. Яракран – Клопов Г.Е. (**31**), Кобрчаков А.С. (**38**), Кошкин А.А. (**42**). Вунпĕр çын вăрçă пуçланнине регулярлă çар чаçĕнче кĕтсе илнĕ: Кольцов Ваçли (**2**), Чашкин Раман (**10**), Ярхинов Кури (**23**), Замятин Хветĕр (**25**), Клопов

Арçик (**34**), Голубев Павăл (**36**), Голубев Петр (**36**), Егоров Ястахви (**37**), Егоров Сергей (**37**), Мартьянов Кришкă (**40**), Кошкин Павăл (**42**).

Çара илнисене ĕнтĕ çăмăл пулман. Шеллекен унта çук. Аманмалли-вилмелли те самантрах, тур ан калатăр, тыткăна лекесси те. Пирĕн ялтан вăрçă вăхăтĕнче пурĕ 60 яхăн çын мобилизацие лекнĕ, çар тумĕ тăхăннă, хĕç-пăшал алла тытнă т.ыт.те, хăшпĕр килсенчен икшер-виçшер, пĕтĕмĕшле – действующи арми, НКВД, ĕç çарĕ, ФЗО.

1941 çулхи çинçере пур ялсенче те ятарлă митингсем иртнĕ, тĕрĕссипе, кашни касра-урамрах вăрçă пирки калаçнă, çĕршывăн çĕнĕ тăшманне хăнăхнă. Яланхи пекех Раççейĕн хĕçпăшаллă тĕп вăйĕ ял халăхĕ пулса тăрать. Ялти арçынсене, каччăсене пĕрне пăрахса хăвармасăр салтака илеççĕ, вăйпитти хĕрсем валли те ĕç тупаççĕ. Бронь тени хулара кăна пулнă, колхоз председателĕсем валли те, нумай ачаллисем валли те вăл пулман. Çав вăхăтрах тата, чăннипе илсен, ялта никамах та мобилизацирен пытанса юлма пикенмен. Чăвашсемшĕн халăхăн, çĕршывăн чи йывăр ĕçĕсене хутшăнма май килни авалтанпах чыс-сум шутланать. Ун чухне те ялйышра çакнашкал туйăм, ĕмĕртен çирĕпленнĕ шухăш хуçаланнă: «Халăх ĕçне пĕр çын тăваймасть», «Пĕрлĕх чул хӳмерен çирĕпрех», «Ыр çын йышпа пурăнать», «Пĕччен çăтмахра та савăк мар», «Халăх хушшинче упа та ташлама вĕренет», «Йышра йыш пек пулас те, ялта ял пек пулас те», «Пурте каяççĕ, эпĕ вара мĕнрен катăк», «Йышра вилĕм те илемлĕ тет» т.ыт.те.

Тылра мобилизаци пуçланнă çеç-ха, чикĕ хĕрринче вара хаяр çапăçусем пынă. Кĕтменлĕхпе усă курса нимĕçсем нумай çĕрте ăнăçлă тапăнса пынă, пысăк хăвăртлăхпа çĕршыв территорине йышăнма тытăн-

нă. Хальлĕхе тăшман стратегипе тактика енчен те, хĕçпăшалĕпе техники енчен те, салтакĕсен хавхаланăвĕ пе те çӳллĕрех шайра тăнă. Вăрçа лекнĕ кашнин салтакăн шăпи хăйне май килсе тухнă.

*Кольцов Иван Петровича* (**1**) вăрçăна 1942 ç. январьте илсе кайнă. Пехотăра пулать. Мăйран хытă аманнă хыççăн 1943 ç. январьте ăна пусĕпех киле яраççĕ. 1944 ç. ноябрьте ывăлĕ *Кольцов Антип Иванович* (1926–1959, Онтип, **1**) салтак тумне тăхăнать.

*Кольцов Василий Андрияновича* (1922 ç.ç., **2**) 1941 ç. майĕнче ялйыш салтака ăсатнă. Чылай çапăçура пулать. 1943 ç. августра питĕ йывăр аманать, 3.09.1943 ЭГ-4855 госпитальте вилсе каять. Астăвăм кĕнекинче ăна Смоленск облаçĕнчи Вязьма р-чи Вертехово ялĕнче пытарнă тенĕ. Ялта ăна флотра пулнă пек те асăнатчĕç. Унăн шăллĕ *Кольцов Петр Андриянович* (1924–1951, **2**) çара 1942 ç. кайнă. Пехотăри салтак хура-шур нумай курать. Йĕпе окопсенче шăнса пăсăлсан вăрçă пĕтичченех вăл киле таврăнать.

*Фролов (Шилов) Пантелеймон Сергеевич* (1902 ç.ç., Пăтĕк, **4**) мобилизаципе ĕç çарне лекет. Свердловскри çар заводĕнче тăрмашаççĕ. Фронта ăсатсан 1942 ç. е 1944 ç. августра хыпарсăр çухалать.

*Петров (Кушманов) Николай Герасимович* (1915–2005, Коль/кк/ă, **7**) вăрçăччен виçĕ çул (1937-1940) РККА кавалеринче пулнă. «Пирĕн дивизин ветчаçĕнче (эпĕ хам 14 кавалери дивизийĕнчи 56 кавалери полкĕн 4 эскадронĕнче хĕсметре тăнă) Сергеев ветфельдшер (1911 ç.ç.) пурччĕ (1939 ç.). Вăл Чапаев штабĕ пĕтнĕ Лбищенск ялĕнчен пулса. Шăмшакĕ ачаранах чирлĕскер килĕнче çавă çичĕ çул тапранмасăр выртнă. Синкерлĕ каç (1919 ç., сентябрь), ялта (шурă) казаксем алхаснă, çурт-хуралтăсене пĕрин хыççăн теприне вут хыптарнă чух, çынсем пурте тарса саланнă пул-

нӑ. Сергеев вара, пӗчченех юлнӑскер, ҫунакан пӳртӗнчен пур вӑйне пухса упаленсе тухать, вут-кӑвартан хӑтӑлма май ҫитерет. Кайран вара ветеринари техникумӗнчен те вӗренсе тухма пултарнӑ, салтака та юрӑхлӑ пулнӑ».

Николай Герасимович 1941 ҫ. ноябрьте вӑрҫа каять. Мензелинскра виҫӗ уйӑх кӗҫӗн политрука вӗрентнӗ хыҫҫӑн ӑна Свердловскра тӑнӑ 221 стрелковӑй дивизин 625 стрелковӑй полкне яраҫҫӗ. 1942 ҫ. ҫулла дивизи Сталинград фронтне куҫать, 8 арми йышӗнче Атӑл хӗрне талпӑнакан тӑшман эшкерне хирӗҫ ҫапӑҫать. Вӗсен полкӗн командирӗ Павлюк майор, комиссарӗ Журавлев, штаб пуҫлӑхӗ Шахрай, 2 батальон командирӗ Коваленко лейтенант (абхаз), 2 рота командирӗ Щербаков лейтенант (Чулхула облаҫӗнчен) пулнӑ. Котлубань таврашӗнчи Надеждино ялӗ ҫумӗнчи 0,53 сӑртшӑн пынӑ ҫапӑҫура Петров Н.Г. 1942 ҫ. сентябрьте йывӑр аманать. Госпитальте пилӗк уйӑх сипленнӗ хыҫҫӑн 1943 ҫ. мартра яла таврӑнать.

Пултаруллӑ купӑсҫӑна ***Чашкин Григорий Николаевича*** (1904–1948, Кришкӑ, **8**) 1941 ҫ. августра вӑрҫа илеҫҫӗ. Вускассипе тухса кайнӑ. Хаяр ҫапӑҫусенче вӗсен чаҫӗ тӑшман svunkine лекет.1945 ҫулчченех вӑл тыткӑнра (Дахау) асапланать. Вӗсен концлагерьне Америка салтакӗсем ирӗке кӑлараҫҫӗ. Сержанчӗ, ашшӗ вырӑс пулнӑран, вырӑсла пӗлетчӗ, тесе каласа панӑ кайран вӑл ялта. Тыткӑнран таврӑнсан ӗҫ ҫарӗ шучӗпе Кришкӑна Шахты хулине ӗҫлеме янӑ. Пӗр 1947 ҫ., хӑйне отпуска ярсан, вӑл килне кӗске вӑхӑтлӑх килсе кайнӑ. Ӑна 1951 ҫ. Ростовра вилнӗ тесе те калатчӗҫ.

***Клопов Иван Петрович*** (1915–1981, Ҫут Иван, **9**) фронта 1941 ҫ. декабрьте тухса кайнӑ. Минометчик, отделени командирӗ пулнӑ, аманнӑ. «Слава» ордена виҫҫӗ тивӗҫнӗ(-?) теҫҫӗ. «Астӑвӑмра» ӑна (Шупашкар хулипе) «Петров» хушаматпа палӑртнӑ, 844 стрелко-



Сталинград ураммĕнчи çапăçусем. 1942 ç. октябрь









Клопов Иван Петрович



Лукоянов Семен Андреевич



Петров Николай Герасимович, 1937 ç.



Клопов Павел Петрович, 1944 ç.



Чашкин
Роман Егорович



Клопов Иван Никитич



Данилов
Фадей Данилович



Архипов Григорий
Филиппович



Купанов Артемий
Иванович



Ярхинов Гурий
Данилович



Яргеев Петр Ивнович



Замятин Федор Григорьевич (сулахайра) ентешĕпе. 1941 ç.



Замятин Степан Григорьевич, 15.06.1935



Клопов Арсентий Семенович



Голубев Трофим Леонтьевич, 1951 ç.



Петров Н.Г. тата Голубев Павел Семенович сержантсем. Бердичев хули, 18.06.1940



Голубев Петр Семенович, 1941 ç.



Урала торф кăларма кайсан (Свердловск, 26.08.1950) фотоательери тумпа ӳкерĕннĕ: Пархи Евкенĕ (Шомик), Голубев Саньккӑ (**36**), хыçалта Модеев Çтаппан (Пошкар).



Егоров Евстафий Ефремович (пĕрремĕш) тата Перцев Федорпа (Çӳлтикасси) Егоров Лука Григорьевич (1914-1964, Катькасси), Рыбачий утравĕ.



Егоров Сергей Ефремович, 1939 ç.



Егоров Александр Ефремович (Рита хĕрĕпе, 1952 ç.)



Кобрчаков Александр Степанович



Мартьянов Григорий Осипович



Кошкин Андрей Алексеевич



Мясников Прокопий Михайлович



Кошкин Павел Алексеевич
Штольн хули
(Германи), 10.08.1945



Мясников Алексей Михайлович (Ужгород хули, 1.12.1948)



Смелов Александр Иванович (Юдино хули, 28.02.1943)



Клопов Павел Петровичпа Кольцов Антип Иванович салтака кайиччен, 19.03.1944



Сылтӑмра Ярхинов Гурий Данилович (Хабаровск, 18.11.1947)

вăй тата сывлăш десанчĕн 2 стрелковăй полкĕсенче çапăçнă, взвод командирĕн çумĕ, старшина пулнă, виçĕ хут аманнă тенĕ. Унăн шăллĕ ***Клопов Павел Петрович*** (1926 ç.ç., **9**) 1944 ç. вăрçа кайнă, 1945 ç. январьте Хĕвелтухăç Пруссире вилнĕ. Астăвăм кĕнекинче ăна 1922 ç.ç., 1945 ç. хыпарсăр çухалнă тенĕ; çавăнтах тепре «Петров» хушаматпа çырса 1920 ç.ç., çапăçура 24.01.1945 вилнĕ, Калининград облаçĕнчи Гвардейски районĕнчи Зорино поселокĕнче пытарнă тенĕ.

***Чашкин Роман Егорович*** (1918 ç.ç., Раман, **10**) сержанта, Астăвăм кĕнеки тăрăх, çапăçура 8.03.1944 вĕлернĕ, Эстонири Нарва хулинче пытарнă (254 стрелковăй полкра тесе 9.11.1942 ç. вилнĕ тени те пур). Вăл салтака 1940 ç. кайнă, 246 е 264 авиаполкра пулнă. Килте аса илнĕ тăрăх вара вăл Ленинград патĕнче çапăçнă, 1943 ç. мартра, аманнăскер, нейтральнăй полосара шăнса вилнĕ, патне пыма май килмен. Амăшĕ, вилнĕ хутне илсен, виçĕ кун ним çимесĕр, тăн çухатса тенĕ пек урайĕнче ӳлесе макăрса йăваланнă. Çапах вăрçă хыççăн чылай кĕтнĕ: «Унта-кунта, вилнисем топăннă тесе калакалатчĕç те». Пĕр 1960 ç.ç. вĕçĕнче çех: «Халĕ килмест полĕ, ĕнтĕ» – терĕ.

***Щербаков Михаил Илларионович*** (1912 ç.ç., **12**) Зина ятлă хĕрĕ çуралнă кун, 1941 ç. июльте е августра, вăрçă хирне тухса утнă. Шел те, вăл 1941 ç. ноябрьтех (Астăвăм кĕнеки тăрăх, ялта каланипе – 1943 ç. вĕçĕнче) хыпарсăр çухалать.

***Щербаков Николай Федоровича*** (**13**) аллă çулсем патне çывхарнă пулсан та вăрçа илнĕ. Аманать, госпитальте сипленсен, 1944 ç. июльте сывалса çитме яла килет. Хыççăн каллех фронта çитет, Будапешта илнĕ çĕре хутшăнать. Çĕнтерӳпе киле таврăнать.

***Замятин Иван Андреевич*** (1908 ç.ç., **14**) вăрçăччен

Дубовӑйӗнче чукун ҫул мастерӗ, Шупашкарти госбанкра кочегар пулса ӗҫленӗ. Вӑрҫӑра пулеметчик пулать, салтака ӑна Шупашкар военкомачӗ янӑ. Таврӑнман. Астӑвӑм кӗнеки тӑрӑх, вӑл кӗҫӗн сержант пулнӑ, 10.08.1942 ҫапӑҫура вилнӗ. Тверь облаҫӗнчи Зубцов районӗнчи Тростянино ялӗнчен вунӑ ҫухрӑмра, Вазуза шывӗ ҫумӗнчи вӑрман хӗрне пытарнӑ тенӗ.

Шор Онтрянӑн Ҫӗрпӳри ача ҫуртӗнчен илсе килнӗ усрав ывӑлӗ ***Кобрчаков Петр Андриянович*** (1924 ҫ.ҫ., Петя, **15**) вӑрҫӑ хирӗнче 1944 ҫ. хыпарсӑр ҫухалать. Астӑвӑм кӗнекинче, ӑнах пулмалла, тепре «Андреев Петр Андреевич» тесе ҫырса янӑ; 31.03.1944 ҫапӑҫура вилнӗ, Псков облаҫӗнчи Псков районӗнчи Рябово ялӗнче пытарнӑ тенӗ. Онтрян хӑй вара лӑп вӑрҫӑ пуҫланас умӗнхи кун вилет.

***Клопов Иван Никитич*** (1902–1966, **16**) малтан салтака кайса килнӗ. РККА хӗсметӗнче Саратовра тӑнӑ, писарь пулнӑ. Вӑрҫӑра вара – полкӑн ҫыхӑну пуҫлӑхӗ, аслӑ лейтенант.

***Данилов (Кушманов) Фадей Данилович*** (1926–1983, Хӑвати, **17**) 1943-1945 ҫҫ. НКВД чаҫӗнче Уралта тӑнӑ. Темле хулара вӗсен патрулӗ пӗррехинче тӑшман диверсантне ярса илет – хӑй тавра, тумтир айӗнче, веҫ антенна пралукӗ чӑркаса тултарнӑ тет. Аккӑшӗ Кӗтерин ҫар заводӗнче ҫунса кайнӑ. Ашшӗн йӑмӑкӗ ***Горланова Клавдия Петровна*** (1903–1944, **17**), чирлӗ пулсан та, вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче сысна ферминче ӗҫленӗ, выҫӑпа вилнӗ.

***Архипов Григорий Филиппович*** (1902–1979, Кӗркори, **18**) ездовой пулнӑ. Пӗррехинче машинпа иртсе кайнӑ чух, фронт умӗнче, ӑна лашапа тем турттарса пынине хамӑр ялти Онтри (**42**) те курать.

***Голубев Александр Наумович*** (1902 ҫ.ҫ., Элекҫи, **19**) Кришкӑпа (**8**) пӗрле вӑрҫа тухса кайнӑ. Ҫарта унпа пӗрле хамӑр енчен Иштерекри Мамаев С.Н. (1908–1982,

Мамаç Çимонĕ), Катькассинчен Çĕньял урамĕнчи çын, Вуспӳрт Чорачăкри Сумков Данила пулнă. Вăрçăран таврăнман. Мамаç Çимонĕ (938 стрелковăй полкра пулнă) вăл вилнинех курнă. Элекçи окопран тухнă та тăрсах хуткупăс каланă-мĕн. Ăнсăртран вĕçсе килсе çурăлнă снаряд ăна пилĕкрен çурмалла татать. Астăвăм кĕнекинче Элекçие 15.08.1942 çапăçура вилнĕ, Калуга облаçĕнчи Мосальск районĕнчи Хопилово ялĕнчи 15-мĕш вилшăтăкне пытарнă, кайран виллине çывăхри Алферьево ялне куçарнă тенĕ. Пĕр ротăрах пулнă Сумков Д. вăрçă хыççăн Ярака вĕçĕм килсе çӳренĕ.

***Купанов Артемий Иванович*** (1907–1987, Ортям, **21**) вăрçă вăхăтĕнче, 1945 çулччен, НКВД тытăмĕн хуралĕнче пулнă. Малтан 320-мĕш завода сыхланă, хыççăн – Йăлăмри 6-мĕш колонире. «Сосновкăри Милютин завочĕ 524-мĕш пулса». «Пĕррехинче пирĕн колоние хамăр ялти 16 çулхи хĕре илсе пычĕç. Амăшне пытарма ĕçленĕ çĕртен янăскер ĕç вырăнне пĕр кун кая юлса çитнĕ-мĕн. Пĕр çул ларчĕ».

***Ярхинов Павел Данилович*** (1905 ç.ç., **23**) вăрçăра тыткăна лекет. Лагерьтен килне çыру та çитет, апатçимĕçпе пулăшма ыйтнă-и. Анчах кунти влаçсем арăмне çырма та, посылка яма та чараççĕ. Тыткăнри пирки, унăн килйышĕ пирки органсем кайран та кăсăкланнă; районта патшалăх хăрушсăрлăхĕпе ĕçлекен Русаков К.Д. (кунта 1945 ç. январь – 1947 ç. мартра пуçлăхĕ пулнă) ку тĕлĕшпе Петров Н.Г. (**7**) фронтовикпа та чĕнсе илсе калаçнă… Астăвăм кĕнекинче Павăл тыткăнри салтаксен лагерĕнче 30.12.1942 вилнĕ, Орел облаçĕнчи Радица поселокĕнче пытарнă тенĕ. Унăн шăллĕ ***Ярхинов Гурий Данилович*** (1919–1971, Кури, **23**) çара вăрçăченех кайнă, авлансан темиçе уйăхран. Çапăçусенче наградăсене те тивĕçнĕ, 1946 ç. яла çĕнтерӳпе таврăннă.



Яргеев Петр Иванович (виççĕмĕш, тăлăппа; варринчи – хачăксем), 30.05.1947



Клопов Иван Никитич (сулахайри)



Замятин Степан Григорьевич (малта, варринче), 5.06.1935



Голубев Павел Семенович (36) хăйĕн отделенийĕнчи салтаксемпе. 1941 ç. пуçламăшĕ



Палласа илеймен салтаксен 42-мĕш килте упранакан сăнӳкерчĕкĕсем



Горшков Александр Федорович.



***Яргеев Петр Иванович*** (1926–1997, Петруш, **24**) авлансан Карамалькассине пурăнма куçнă. «1943 ç. октябрьте салтака илчĕç. Лексе Хĕвеланăç Украинăна, фронт иртсе кайнă çеç. Раково ялĕ патĕнче пирĕн НКВД полкне бендеровецсем тапăнчĕç, пур енчен пересçĕ. Полк командирĕ Сергеев (лайăх çынччĕ) тӳрех вилчĕ. Çул икĕ енĕпе те сăртсем. Ман çумра тăракан салтак та вилчĕ. Полка пирĕн рота командирĕ, капитан, йышăнчĕ. Эпир машина айне кĕрсе выртрăмăр. Ман çумрах чăваш выртатчĕ, вăл та вилчĕ – шинелĕ çара юн. Эпир атакăна тухса пĕр енчи сăртне аран илтĕмĕр, тепĕр енчен çурăма пенĕ пирки пит нумай салтак тăкăнчĕ. Пит нумай машина çунса кайрĕ, пĕтĕмпе те 23 машина çеç юлнă. Тепĕр кунне вĕсем çине вилнисемпе аманнисене тиесе ятăмăр… Салтакран 1950 ç. таврăнтăм. Эпĕ салтакран килетĕп – ял пуçĕнче Кришкăсем пӳрт лартаççĕ...» Астăвăм кĕнекинче ăна запасри 359 стрелковăй полкри стрелок пулнă тесе палăртнă. Шăллĕ Замятин Владимир Николаевич (1938 ç.ç., **24**) хушса калани: «Пичин вилнĕ хочĕ те килсе. Тепĕр икĕ эрнерен тап-таса çыру килсе, сĕтпе çырнăскер. Лампа çинче тытса вуласа – пит лайăх порăнатăп, тенĕ».

Ялти маттур активист ***Замятин Степан Григорьевич*** (1909 ç.ç., Çтаппан, **25**) вăрçă пуçлансан Щербаков И.М. (**12**) пĕрле салтака тухса кайнă. Гварди полкĕнче санинструктор пулнă, аманнă та. 1942 ç. илемкунхи çапăçура вара вилет. Астăвăмра ăна Смоленск облаçĕнчи Ельня районĕнчи Сосновка ялĕнче пытарнă тенĕ. Çтаппанăн учительте ĕçленĕ шăллĕне ***Замятин Федор Григорьевича*** (1912 ç.ç., **25**) 1940 ç. çара илнĕ. Хĕсметре Николаев хулинче тăнă (Киев çар округĕ), сержант. Тăшман аллине лекнĕ. Тыткăнра унпа пĕрле Катькассинчи Кузнецов Евгений Миронович та (1918–1991) пулнă. Федорсен ушкăнне нимĕçсем лагерьтен çĕрле илсе тухса

кайнă та вăл урăх курăнман. Астăвăм кĕнекинче вара ăна Киев облаçĕнчи 22.09.1943 çапăçура вилнĕ тесе палăртнă. (Асăннă лагерьтех тыткăнра Москакассинчи Агенешев учитель те пулнă. Нимĕççем çакна тăлмач пулма илсе кайнă тет. Вăрçă хыççăн таврăнсан унăн ĕçне патшалăх хăрушсăрлăхĕн офицерĕ Окунев Илларион Иванович, Çĕнĕ Томлайран, тĕпченĕ. Телейсĕр çынна совет лагерьне ăсатнă). Çтаппанпа Хĕветĕрĕн ĕçчен мăшăрĕсем иккĕшех пĕр пӳртре туслă пурăнса хăйсен чыслă кунçулĕсене ирттерчĕç:

Суха туса, тырă акса
Алран лаша, ай, каймарĕ.
Вăрман касса, утă çулса
Йывăр ĕç манран хăпмарĕ.
Шартлама хĕл иртсе кайрĕ,
Кĕрĕк çийĕмре пулмарĕ.
Çамрăк ĕмĕр иртсе кайрĕ,
Çумра мăшăр пулмарĕ...[9]

***Клопов Николай Яковлевич*** (**26**) Отечественнăй вăрçăра та тăршшĕпех фронтра пулать, аманать. Повар пулнă. Пĕррехинче вĕсен полевой кухни çинех нимĕç десанчĕ анать, çапах кĕске çапăçура тăшман салтакĕсене пĕтерме май килет. Тепринче тата, окопри хамăр салтаксем патне апат леçнĕ чух, миномет обстрелне лекет; пĕр мина катăкĕнчен ăна çурăм çинчи яшка термосĕ çăлса хăварать. Килĕнче вара арăмĕ Натали çав йывăр вăхăтра пӳрт çĕнетме пикеннĕ. Платниксен ĕçне тырăпа саплаштарнăскер пач çăкăрсăр юлать. Ачисене сывă хăварнă пулин те хăй 1944 ç. выçăпа вилет.

***Фомин Василий Николаевича*** (Ваçли, **27**) çара тӳрех илмен. 1941 ç. ноябрьте ăна ялти колхоза ертсе пыма хушаççĕ. Ун çинех ялйыша Сăр çинче ĕçлеттерес, нормăна пурнăçлаттарас йывăрлăхсем тиеннĕ.

Карамальсем



Бычков Никита Афанасьевич (1913-1991) 124 сăрт-ту кавалери полкĕнче, 4 артиллери гварди дивизийĕнче разведчик пулнă. «Слава» орден илнĕ. 15.12.1944



Гаврилов Михаил Семенович (1915-1977) артиллерист Прибалтикăра аманнă.



Иванов Василий Архипович (1902-1988) Ржев патĕнчи çапăçусенче аманнă. III степенлĕ «Слава» ордена, «За отвагу» медале тивĕçлĕ.



Никитин Лазарь Федотович (1917-2002) шофер 285 стр. дивизире, 835 артиллери полкĕнче пулнă. «За отвагу», За боевые заслуги» медальсене тивĕçнĕ. 1937 ç.



Иванов Петр Архипович (1907-1983) 1930-1956 ç.ç. çарта пулнă, японецсемпе çапăçнă. «Хĕрлĕ Ялавпа», «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденĕсене тивĕçнĕ. 1949 ç.



Измайлов Николай Васильевич (1925-1995) 381 артиллери полкĕнче (391 ОПАД), 43 механизациленĕ гварди полкĕнче пулнă. «За боевые заслуги» медале тивĕçнĕ.1.12.1944



Портнов Филипп Данилович (1900-1942) Колчака хирĕç çапăçнă, 1935 çултан-па ялти «Безбожник» колхоз председателĕ пулнă. Смоленск патĕнчи çапăçусенче хыпарсăр çухалнă.



Толстов Никита Герасимович (1918-1970) 1938-1946 çç. çарта пулнă. Вăрçăра 761 тата 142 артиллери полкĕсенче çапăçнă. Медальсене тивĕçнĕ. 1945 ç. апрель.



Венский Иван Степанович (1912 ç.ç.) НКВД тытăмĕ-нче майора çитнĕ. 27.08.1939

## Калайкассисем



Беляев Степан Андреевич (1912-1953) кĕçĕн сержант



Борзаев Николай Кузьмич (1923-1995) 96 стрелковăй бригадăра пулнă. «За боевые заслуги», «За оборону Сталинграда» медальсене тивĕçнĕ



Воронов Алексей Кириллович (1920-1999) 215 стрелковăй полкри пулеметчик пулнă, йывăр аманнă, II степеньлĕ «Отечественнăй вăрçă» ордена тивĕçнĕ. 32 кг таякан «Максимпа» çӳренĕ



Воронов Павел Ефимович танксемпе кĕрешекен батальонта, пулеметчик пулнă.



Волкова (Вострейкина) Вера Семеновна (1922-1961) 1942-1945 çç. фронтра пулса Берлина çитнĕ



Горланов Александр Никитич (1926-1997) аслă сержант авиакорпусра 205 çыхăну ротинче пулнă. «Слава» ордена, «За боевые заслуги», Варшавăна, Берлина илнĕшĕн медальсене тивĕçнĕ. Хыççăн 542 десант полкĕнче: аэростат çинчен 48 хут, самолет çинчен 53 хут парашютпа сикнĕ



Горланов Василий Гаврилович (1922-1993) аслă сержант 678 уйрăм автополкра пулнă. «За боевые заслуги», «За оборону Сталинграда» медальсене тивĕçнĕ



Горланов Данил Иванович (1907-1941) 1929-1931, 1938, 1939-1940 (Финн вăрçи) çç. çарта пулнă. ку вăрçăра сапер пулнă, июльтех хыпарсăр çухалать



Горланов Иван Михайлович (1907-1943) çапăçура вилнĕ. Ăна Харьков обл. Сухая Гамольша хуторĕнче пытарнă



Ершова Елена Ивановна (1925 ç.ç.) 1944-1945 çç. вăрçăра, Литвара, пулнă. «За отвагу» медальпе наградăланă



Ершов Федор Кузьмич (1910-1943) сержант Волхов фронтĕнче хыпарсăр çухалнă



Лихачев Арсентий Андреевич (1914-1963) нумай çапăçусенче пулнă. «За отвагу» медале тивĕçнĕ



Любимов Мефодий Степанович (1921 ç.ç.) Мускав патĕнче пулнă, аэродромсене тимлекен 465 батальонпа Украинăна, Румыние, Болгарие, Венгрие, Австрие ирĕке кăларнă, кайран ватăличченех çарта пулнă, полковника çитнĕ. Ленинград, 1953 ç., тăван ялтан салтака килнĕ Ершов Геннадий Ивановичпа пĕрле ӳкерĕннĕ



Портнов Павел Кузьмич (1918-1943) сержант çапăçусенче хыпарсăр çухалнă. 15.12.1940



Портнов Петр Кузьмич (1920-1991) минометчик Украинăри, Венгрири, Румынири, Германири çапăçусене хутшăннă. Житомир патĕнче тыткăна лексен тарма пултарнă



Пущин Андрей Кузьмич (1919 ç.ç.) артиллерист пулнă, НКВД-ра пулнă. Виççĕ аманнă. «За отвагу» медале тивĕçлĕ. Сегед хули (Венгри), 1945 ç.



Скворцов Михаил Андреевич (1924 ç.ç.) танкист пулнă



Соловьев Арсентий Андреевич (1904-1942) çапăçура вилнĕ. Ăна Тверь обл. Оленино р-нчи Староселье ялĕнче пытарнă



Таймасов Сергей Сидорович аслă лейтенант гварди чаçĕнче пулнă, виçĕ хут контузи илнĕ, тăватă хут аманнă. Минск, 15.12.1945



Тумашов Сергей Федорович (1917-1945) летчик-штурмовик 941 авиаполкра пулнă. «Отечественнăй вăрçă» орденне тивĕçнĕ. Венгринче çапăçура вилнĕ



Угаров Павел Захарович (1916-2000). 1942 ç. тыткăна лекет. Персе пăрахмала чухне 8-ăн Франције тараççĕ. 1944 ç. Швейцари, Мурманск урлă таврăнса каллех хамăр çар ретне тăрать, шофер пулать



Ярусов Лука Васильевич. 23.04.1948

1942 ç. çапах ăна та вăрçа ăсатаççĕ. Унпа пĕрле пĕр полкрах хамăр ялти Голубев А.Н. (**19**) тата Ярхинов П.Д. (**23**) пулнă тетчĕç. Аманса тыткăна лекет. Вĕсене Прибалтикăри лагерьте тытнă. Васлипе пĕрле кунта Калайкассинчи Воронов Павел Ефимович (1905 ç.ç.) та пулнă. (Астăвăм кĕнекинче ăна темшĕн 25.09.1942 çапăçура вилнĕ, Смоленск облаçĕнчи Велиж районĕнчи Дрозды ялĕнче пытарнă тенĕ). Лагерьтен хăтарсан Васлие ĕç çарĕ («трудовая армия») шучĕпе Ростов облаçĕнчи шахтăна янă. Астăвăм кĕнекинче ун пирки Брянск фронтĕнче çапăçнă, икĕ хут аманнă тенĕ.

***Клопов Павел Ефимович*** (**29**) тĕреклĕ арçын пулнă, çапах ăна арăмĕпе виçĕ ывăлĕ вăрçăран кĕтсе илеймеççĕ. Астăвăм кĕнекинче ăна 9.03.1943 çапăçура пуçне хунă, Смоленск облаçĕнчи Темкино районĕнчи Некрасово ялĕнчен пĕр çухрăм кăнтăр-хĕвелтухăçнелле пытарнă тенĕ. Ывăлĕ Миша (1940–2014): «Аттин юлашки çырăвĕ 1943 ç. питрав (12.07.) умĕн пулчĕ – кĕçех çапăçусам, петро таки полатпăр поль... Унпа пĕрле полнă Сундырь патĕнчи çын апия кайран каланă, ман алăрах вилсе кайрĕ – мина лекнĕччĕ, тесе».

Павăл шăллĕ ***Клопов Герасим Ефимович*** (1906 ç.ç., Караççăм, **31**) учитель, парти членĕ пулнă. 1928-1930 çç. вăл РККА хĕсметĕнче тăнă, çара ун чух Калайкассинчи Таймасов Миххепе пĕрле кайнă. Вăрçа тепĕр эрнерен тухса каять: отделени командирĕ, сержант. Урараи амансан, пĕр хушă сипленнĕ. 1943 ç. сентябрьти çапăçура вара вилет. Астăвăм кĕнекинче ăна та çавăнтах, Смоленск облаçĕнчи Темкино районĕнчи Некрасово ялĕнче пытарнă тенĕ.

Чăваш ачи ман тантăш каччă,
Ăçта çухалтăн эс, ăçта?

Куккук ун чух та авăтатчĕ
Смоленск вăрманĕнче таçта.
…
Хăруш саспа снаряд вĕçетчĕ,
Турпас пулатчĕç ват хырсем.
Кĕске хăш чух салтак кунçулĕ,
Пĕлместĕн вилĕм сехетне…
Атакăна кĕрсессĕн пулĕ
Сана ÿкерчĕ çĕр çине.
…
Сана пытартăмăр пĕр шывăн
Сĕвек çыранĕ хĕррине…[10]

***Клопов Арсентий Семенович*** (1914–1982, Арçик, **34**) пурнăçне пĕтĕмпех çарта (1933-1979 çç.) ирттернĕ, капитан званипе отставкăна тухнă. Вăрçăра куçса çÿрекен радиостанци пуçлăхĕ пулнă. Амансан пĕр хушă ялта сывалать. Кенигсберга, Берлина илнĕ çĕре хутшăннă. Унăн шăллĕ ***Клопов Иван Семенович*** та (1923–1975, **34**) çартах пурнăçне ирттернĕ: 1941-1975 çç. Вăрçă вăхăтĕнче авиаци полкĕнчи писарь пулнă.

***Голубев Трофим Леонтьевич*** (1912–1960, Троххин, **35**) вăрçа кайсан пĕрре аманать, тепринче (1942 ç.) тыткăна лекет. 1944 ç. ăна лагерьтен Власов генерал çарне илеççĕ. Франципе Германин оккупаци чаçĕсемпе пĕрле хуралта çÿренĕ пулмалла. 1946 ç. лерен вĕсене тыткăнри нимĕçсемпе улăштараççĕ, Мускавра ВДНХ юсанă çĕре хутшăнтараççĕ. Яла таврăнсан нумаях пурăнаймасть – унăн Франципе тунă икĕ сăнÿкерчĕкĕ, пÿртри мачча кашти айне хĕстерсе хунăскерсем, хăй патне çăматă çĕлетме пынă ялти пĕр çивĕч куçлă çынна тăрăнаççĕ. (Çак ĕç-пуç çинчен хушса асăрхаттарнисем: «Франципе хуçа патĕнче ĕçленĕ, çавăнта лавçă пулса ÿкерттернисене яла илсе çитернĕ»; «килекен çынсем

умĕнче, ман Троххин та вăрçăра пулса, ак, мĕнле вăл тăрать, текелесе арăмĕ мухтанкаланă»). Троххина ялтан çыхса пăрахсах çунапа илсе тухса каяççĕ. 1948 ç. ăна «Совет çĕршывĕн сутăнчăкĕ» тесе айăплаççĕ, тулли конфискаци туса хăйне 12 е 25 çуллăха хупмалла тăваççĕ, килĕнчи пĕтĕм хуралтăна колхоза турттарса каяççĕ, пӳрт кăшкарне çеç хăвараççĕ. Ăна сывлăхшăн питĕ сиенлĕ çĕрте ĕçлеттереççĕ, çын ĕретĕнчен тухсан пĕр 1954 ç. киле яраççĕ. «Килте шăршлă пирки çын та пырса çӳремен».

Тыткăнри пурнăç пурнăç мар ĕнтĕ. Акă, Калайкассинче паллă ăста пулнă Трофимов Федор Трофимович (1911-1996) та 5.09.1941 ç. тыткăна лекет. 1932-1934 çç. РККА пулнăскер вăрçа вăл тепĕр куннех тухса кайнă, 164 запасри стрелковăй полкра пулнă. Лагерьте (Финляндири Автокумп текен вырăнта) тимĕр сăнчăрта, шывпа çăкăрпа çеç пурăннăран 78 килоран 28 кило çеç таякан пулать. Юрать, кайран ăна, вăл йывăçран тĕрлĕ хитре япаласем ăсталаса ларнине курса, пĕр пуян çын хăй патне тарçăна ĕçлеме илсе кайнă. Финляндипе 1944 ç. мирлĕ килĕшӳ тусан тин вăл ирĕке тухать, тĕрĕслев лагерĕнче 22 кун тытсан 1947 çулчченех каллех хамăр çарта тăрать.

Карамальти Калинин Алексей Михайлович (1911–1993) унччен çарта пулнăран малтанхи кунсенчех вăрçа тухса каять. Çапăçусенче пулать. «Шурлăхсенче çӳреме çулсем тума пĕр çĕрте хамăрăн вилнĕ салтаксене тăршшĕпе! хурса тухнăччĕ. Çавсем тăрăх утса тухса тепĕр позици йышăнтăмăр». Анчах вăл та Мга шывĕ çинче командовани хушнă ăнăçсăр наступление тухсан 21.10.1941 тыткăна лекет. «Лагерьте шыв кӳлленчĕкĕсенчи йыт пуллисене ăмăртса çисе яраттăмăрччĕ». 1945 ç. апрельте тыткăнран хăтарсан тĕрĕслев

лагерĕ витĕр ăнăçлă тухать, хыççăн каллех совет çарĕнче хĕсметре тăрать.

Тыткăна Маутхаузен концлагерĕнче ирттернĕ салтак асаилĕвĕнчен: «Пире пăхса тăракан нимĕçсем хушшинче пĕр чăваш та пурччĕ. Манпа чăвашлах калаçатчĕ, хăй ăçтан тата кам пулнине палăртмастчĕ – кайран сутасран хăратчĕ-тĕр. Вăт çав чăваш мана хăйĕн паекĕнчен çимеллисем паратчĕ. Еврейсемшĕн вара унта кун çукчĕ: кăнтăрлаччен чул йăттаратчĕç те каçчен крематорире çунтаратчĕç…»[11]

***Голубев Павел Семенович*** (1918–1980, Мăн Павăл, **19**, 1935 ç. килйышĕ **36** куçнă) 1938 ç. çара кайнă. Кĕçĕн командира вĕренсе тухнă, уйрăм çыхăну батальонĕнчи çыхăнуçă пулнă. Бердичев хулинче икĕ уйăх хамăр ялти Петров Н.Г. (**7**) пĕрле хĕсметре тăнă. Вăрçă пуçламăшĕнчех тыткăна лекет. Лагере пуçтарнă красноармеецсенчен нимĕçсем украинецсене уйăрса килĕсене салатнă чух вăл та хăйне Голуб Павло украинец тет, хăйĕн украинец тусĕпе вĕсен ялне каять. Партизан юхăмĕ пуçлансан вăл партизан отрядĕнче, Ковпак соединенийĕнче, çапăçать. Хыççăн, 1946 çулччен, регулярлă Совет çарĕн йышĕнче пулать, 62 артиллери полкĕнче, аслă сержанта çитет. Пуçаруллă сержанта партизан медалĕпе, «За боевые заслуги» медальпе т.ыт. наградăланă. Шăллĕсем те вăрçăра пулнă. ***Голубев Петр Семенович*** (1921 ç.ç., **36**) вăрçăчченех салтака кайнă. Шел те, 1944 ç. вăл хыпарсăр çухалать. Кĕçĕн ывăлĕ ***Голубев Александр Степанович*** (1925–1954, Санькка, **36**, вăрçă хыççăн мăшăрĕпе **4** пурăнма куçать) Ленинград фронтĕнче çапăçнă. Аманса пĕтнĕскер вăрçăран таврăнсан нумай пурăнайман.

Калайкассинче пурăннă Пигенешев Иван Павлович (1919–1992) каласа панинчен: «Пирĕн Белосток хули патĕнче вырнаçнă 4 артиллери полкне нимĕçсем

пĕрремĕш куннех аркатса тăкрĕç. Икçĕре яхăн машинăран темиçе кăна юлнăччĕ. Салтаксем, кам мĕнле пĕлет çапла, ним йĕркесĕр, выçăллă, лару-тăрăва пĕлмесĕр хĕвелтухăçнелле талпăнтăмăр. Çавăн чухне чылайăшĕ нимĕçсен аллине çакланчĕç. Июлĕн 1-мĕшĕнче Красный Берег ятлă (Могилев обл. Клинцов р-нĕ) патĕнчи хырлăхра эпĕ Кобринец Л.М. лейтенант (поляк), Аркаша кĕçĕн лейтенант (еврей) тата Шендрик Николай сержант (украинец) ушкăнне тĕл пултăм. Вĕсен стрелковăй полкне те тăшман пĕтернĕ пулнă. Июлĕн 9-мĕшĕнче пирĕн ушкăна Витебскри пехота училищин çичĕ курсанчĕ хушăнчĕ: Игунцов, Гортанов, Фомичев, Волков, Тикарев тата икĕ Соболев. Пирĕн партизанла отряда салтаксем кайран та хушăнчĕç… Темиçе хут та нимĕç карателĕсемпе çапăçусене кĕтĕмĕр… Ноябрĕн 7-мĕшĕ тĕлне Брянск вăрманĕсене çитрĕмĕр. Унта пирĕн командир Кобринец партизансен соединенийĕн ертӳçи Д.Н. Медведевпа çыхăну йĕркелерĕ, унпа хамăрăн ушкăна фронт урлă каçарас пирки калаçса татăлчĕ. Вара эпир, 50 çын ытла, 1942 ç. мартра «Вутлă коридор» витĕр тухса хальхи Калуга облаçĕнчи Мещевск хули çумĕнче регулярлă Хĕрлĕ çарпа пĕрлешрĕмĕр».[12]

***Егоров (Кобрчаков) Евстафий Ефремович*** (1915–1992, Ястахви, **37**): «Салтака эпĕ 1940 ç. хамăр ялти Раманпа (**10**) пĕрле кайрăм. Виçĕ уйăх карантин хыççăн (Мурманск çывăхĕнче) Баренц тинĕсне тухакан Рыбачий (çур)утрав çине куçарчĕç. Норвеги çыранĕ кунтан утмăл çухрăмра. Рамана 1941 ç. мартра Ленинграда куçарчĕç, нумаййăн вĕсене ун чухне куçарчĕç. Уйрăлнă чухне Раман мана: «Корăн вот, эп киле салтакран кайимастăп» – терĕ. Эпĕ вара вăрçă тăршшĕпех çав утравра пулса. Пирĕн 104 тупăллă артиллери полкĕн командирĕсем Риклис, Гаун, юлашкинчен Аршинский майорсем пулчĕç. Полкра тăвату дивизиончĕ, кашнинче виçшер батарея, эпĕ вара


За нашу Советскую Родину!

ГРАМОТА

Товарищ Егоров Е. Е.

За безупречную, долголетнюю службу на Тихоокеанском Военно-Морском Флоте ВОЕННЫЙ СОВЕТ ФЛОТА объявляет Вам БЛАГОДАРНОСТЬ и награждает грамотой.

Желаем Вам высоких трудовых успехов в области социалистического строительства и выражаем уверенность, что Вы высоко будете хранить честь Тихоокеанского флота.

полк штабĕн батарейинче пулнă. Пирĕн çыранти артиллери Çурçĕр флочĕн шутланнă, малтанах Карели фрончĕн 14 çарĕнче тăратчĕ.

Пирĕн патран нимĕçсем иртсе каяйман. Вĕçĕм бомба килсе тăкатчĕç, пысăк чулсем çапах пире хӳтĕлетчĕç. Пирĕн батарейăсем умĕнче 135 пехота полкĕ тăратчĕ, унта çурри таран та пулĕ чăвашсемччĕ. Хамăр полкра та ентешсем пулса: Перцев (Çӳлтикассинчен) т.ыт.те. Пĕр дивизион комиссарĕ Шильдяков та чăваш пулса, Шупашкар районĕнчи Платкаран. Хозвзводра вара хакассемччĕ.

1945 ç. апрельте пире Рыбачинчен кăларчĕç. Пĕр уйăх тавар вакунĕсенче Инçет Хĕвелтухăçне кайрăмăр. Майăн 2-мĕшĕнче пирĕн пĕтĕм 104 ПАП Артем хулине çитсе вырнаçрĕ. Август уйăхĕнче Корейăна кĕртсе ячĕç. Пирĕн полк Сейсин хулине йышăнчĕ, эпир унта çитиччен хулана пĕтĕмпех разбомбить туса пĕтернĕччĕ. Кунта хĕсметре эпĕ 1946 ç. августра киле яриччен пултăм, сентябрьте киле çитрĕм».

Ястахви шăллĕ, 1930 çç. комсомол активисчĕ ***Егоров (Кобрчаков) Сергей Ефремович*** (1918–2012, **37**) çарта 1938–1946 çç. тăнă. Ун хыççăн ГУЛАГ тытăмĕнче ĕçленĕ. Фронтра вăл заградотрядра хĕсметре тăнă, НКВД сержанчĕ пулнă. Хамрăннисене чакакана курсан, иккĕленӳллĕ çынна тытсан НКВД сержанчĕн полковник таран персе пăрахма ирĕк пулнă.

Фронт линийĕ çĕршыва шалах кĕрсе кайнăран 28.07.1942 И.В. Сталинăн «Ни шагу назад» хушăвĕ тухать. Çав приказпа ĕнтĕ штраф батальонĕсемпе (кашнинче 800 çын таран, пĕр фронтра 3 батальон таран) штраф ротисем (кашнинче 150-200 çын, пĕр армире 5-10 рота) йĕркелеме пуçлаççĕ, çавнашкалах – заградотрядсем (кашнинче 200 çын таран, пĕр армире 5 таран).

Пĕррехинче Сергей малти позицисем тавращĕнчех хăйĕн пускилне те курнă: «Элексçи пичи (**19**) станковăй пулемет туртса утать. Калаçрăмăр…» Тепĕр шăллĕ ***Егоров (Кобрчаков) Александр Ефремович*** (1921–1998, Санькка, **37**) пограничник пулнă, кĕçĕн лейтенант. Вăрçă вăхăтĕнче вăл Камчаткăра чикĕ заставин пуçлăхĕн çăмăл мар тивĕçĕсене пурнăçланă, сахал мар нарушителе, уйрăмах яппунсене, сиенсĕрлетнĕ.

***Кобрчаков (Степанов) Александр Степанович*** (1910–1990, Элексантăр, **38**) 1930 çç. пуçламăшĕнче икĕ çул НКВД салтакĕ пулнă (Алтайра). 1939-1940 çç. хĕлле финн вăрçине хутшăнать. Отечественнăй вăрçа тепĕр куннех хăйматлăхĕ Караççăмпа (**31**) пĕрле тухса каять. Ытларах вăл Чулхула тавращĕнче НКВД 205 полкĕнче хĕсметре тăнă. 1943 ç. сусăрăнсан яла таврăнать.

***Фомин Яков Николаевича*** (1909 ç.ç., Якку, **39**) хăлхи витĕрех илтмен пулин те 1942 ç. вăрçă хирне илсе кайнă. Ăна фронта çитнĕ-çитмен вилнĕ тетчĕç. Астăвăм кĕнекинче ăна 12.09.1942 çапăçура вилнĕ, Чечено-Ингушетири Моздок районĕнчи Биковичи ялĕнче пытарнă тенĕ.

***Мартьянов Григорий Осипович*** (1912 ç.ç., Кришкă, **40**) вăрçăччен çĕрвиçевçине вĕренсе тухнă, учительте те ĕçленĕ. 1941 ç. июньте çара илнĕ. Фронтра вăл полкăн çыхăну пуçлăхĕ пулнă, аслă лейтенанта çитнĕ, Отечественнăй вăрçă орденне тивĕçнĕ. Астăвăм

кĕнекинче ăна сурансене пула 25.07.1944 медсанбатра (МСБ-150) вилсе кайнă, Эстонири Нарва районĕнчи Кейкино ялĕнче пытарнă тенĕ. Пурăннă чух ĕмĕрĕпех шкулта ĕçленĕ мăшăрĕ Ксения Степановна (1916–1991), унăн вилтăпри çинче пулса, пĕр ывăç тăпра илсе ял çăви çине килсе хума ĕмĕтленетчĕ.

Темиçе вăрçăра та пулнă, колхозра конюхра тăрăшнă ***Кошкин Лука Иванович*** (**41**), Астăвăм кĕнеки тăрăх, 1944 ç. çапăçура вилнĕ пулать, ăçта пытарни паллă мар. Хамăр ялти Щербаков Н.Ф. (**13**) хăй аманса 1944 ç. çулла яла киличчен ăна фронтра курнă пулнă. Ялти сăмах тăрăх вара, Лука тыткăна лекнĕ-мĕн (1942 çултах – ?). Вăрçă хыççăн, мăшăрĕн тыткаларăшĕпе кăмăлсăр пулнăран, тăван яла таврăнас темен. Таçта, ют çĕршывра пурăнма юлнă тет-и.

***Кошкин (Алексеев) Андрей Алексеевич*** (1915–2003, Онтри, **42**) вăрçăччен икĕ çул салтакра пулать. Вăрçă пуçлансан пĕр-ик кунтанах çара илеççĕ. Волхов фронтĕнче (135 моторлă сапер полкĕ), Кăнтăр-Хĕвеланăç фронтĕнче (штабăн ятарлă роти), 3 Украина фронтĕнче хĕсметре тăнă. Шофер пулнă, контузи илнĕ, 1945 ç. июньте яла таврăннă. Унпа пĕрлех Карамальти Никитин Лазарь та (1917-2002) шоферта çӳренĕ. Онтри шăллĕ ***Кошкин Павел Алексеевич*** (1918–1990, **42**) 1938 çултанпа çарта пулнă, оруди командирĕ. Сталинграда политрук пулса хӳтĕленĕ. Вăтам командирсен курсĕсенчен лейтенант пулса тухнă. Белорусси фронтĕнче (21 дивизинче) çапăçнă, Хĕрлĕ Çăлтăр тата II степеньлĕ Отечественнăй вăрçă орденĕсене тивĕçнĕ. Германирен яла 1946 ç. таврăннă.

***Мясников Прокопий Михайлович*** (1914-1996, Прокох, **43**) вăрçăччен салтака Онтрипе пĕрлех кайса килнĕ. Чукун çул çар чаçĕнче пулнă пулмалла. Вăрçă пуçлансан 320-мĕш завод хуралĕнче пулать. Хыççăн

фронтра пулнӑ – 29 дивизире. НКВД 700 тата 119 полкĕсенче тӑнӑ: «Пĕрре власовецсемпе ҫапӑҫрӑмӑр, пĕри парӑнмасть!». Вӑрҫӑ вĕҫĕнче каллех Чапаевски завод хуралĕнче пулнӑ пулмалла. Унӑн шӑллĕ ***Мясников Алексей Михайлович*** (1925–1987, **43**) 1942 ҫ. вĕҫĕнче Смелов Санькkипе (**45**) пĕрле салтака кайнӑ. Можайск патĕнчи ҫапӑҫусенче аманнӑ. 1950 ҫ. яла таврӑннӑ.

Ялта колхоз йĕркелӳҫи тата ертӳҫи, ҫар тумĕпе нумай ҫул ҫӳренĕ ***Смелов Иван Яковлевич*** (**45**) лейтенант 1939-1940 ҫҫ. Каршлӑхра допризывниксене вĕрентнĕ. Вӑрҫӑ пуҫлансан вара Граждан вӑрҫинче палӑрнӑ юлташĕпе Волков А.А. майорпа (1888–1956, Хачӑк Салинчен) ҫара тухса каять. 1944 ҫулччен Гороховец лагерĕнче (Чулхула облаҫĕ) фронт валли кĕҫĕн командирсем, тĕрлĕ специалистсем хатĕрлет. 55 ҫул тултарнӑ май ӑна демобилизациленĕ.

Ывӑлĕ ***Смелов Александр Иванович*** (1925–2005, Санькkӑ, **45**) ҫарта 1942 ҫ. декабрьтен пуҫласа 1946 ҫ. июньччен пулать. 1943 ҫ. июль-августра Курск пĕккинче паттӑрлӑх кӑтартнӑшӑн «За боевые заслуги» медале тивĕҫет. Кунта вӑл 11 гварди армийĕн 16 (249) Карачевски дивизин 43 полкĕнче пулнӑ. Августра пĕтĕмпех чӑвашсенчен тӑнӑ вĕсен взводĕнчен стройра иккĕн ҫеҫ юлаҫҫĕ: Санькkӑпа М. Шутин (Куславкка районĕнчен, кайран обкомра ĕҫленĕ).

«1944 ҫ. июнь-ноябрь уйӑхĕсенче эпĕ Ленинградри кĕҫĕн лейтенантсен курсĕнче вĕрентĕм. Малтан унта, Фински залив хĕрринче, Буденный ячĕллĕ ҫыхӑну академийĕ ĕҫленĕ. Вĕреннĕ вӑхӑтра манӑн темиҫе хут та Оринӑ ялĕнчи хамӑрӑн тӑван Булочников Максим Георгиевич (1889–1973) хваттерĕнче пулма тӳр килчĕ.

Хĕрĕпе (Лена, 1930 ҫ.ҫ., ӑна вырӑс тесе ҫыртарнӑччĕ) хулана та эпĕ унӑн ҫипуҫне тӑхӑнса тухкаланӑ (мана

вăл питĕ пысăкчĕ). Арăмĕ шӳтлесе хăналатчĕ, давай солдату тяжелую пищу, тетчĕ; чăвашла нумай калаçсан, что бормочете, текелетчĕ. Вăл еврейкăччĕ… Булочников М.Г. 1918 ç. Совет правительстви пуçлăхĕ В.И. Ленинăн ятарлă хушăвĕсене пурнăçланă, С.М. Кировпа юлташлă пулнă. 1944 ç. вăл Ленинград укрепрайонĕн е штабĕн членĕччĕ пулмалла, политработник, штатски тумпа çӳретчĕ. Петроград енчи М. Горький урамĕнчи тăватă хутлă, пĕр подъездлă 28-мĕш çуртра пурăнатчĕç: 2 этаж, сылтăм енчи икĕ пӳлĕмлĕ хваттер. Сакăр хваттерĕнче те пысăк пуçлăхсем, аялта милиционер ларать. Çак çурт çумĕнчех чалăшрах Киров пурăннă 25-мĕш çурт (музей) тата стадион пулса. Максим Георгиевичсен хваттерĕ пуянччĕ: хаклă дивансем, икĕ пианино. Правительство паекне илетчĕç. Вăрçă пуçлансан арăмĕ, нимĕçсенчен шикленсе, килти нумай документсене çунтарса янă. Анчах çав çулах, 1941 ç., упăшки ăна самолетпах Киров облаçне эвакуациленĕ. (Малтанах вăл арăмне Кармăша качча кайнă йăмăкĕ патне ăсатас тенĕ. Лешĕ, ялта çăкăр пачах çук, тесе пĕлтерсен шухăшне улăштарнă)… Юлашкинчен, фронта тухса кайнă чухне, пуйăс тапранасси икĕ сехет кăна юлнăччĕ, эпĕ вĕсем патне сывпуллашма кĕрсе тухрăм. Хампа пĕрле военторгран ултă кĕленче водка илтĕм. Килте вара арăмĕ пĕчченех пулчĕ: «Булочников Смольнăйра, канашлура, çурçĕр иртмесĕр те килеймест…», – терĕ.

1945 ç. январь-июль уйăхĕсенче Санькка Ленинград фронтĕнчи 2 ударлă армин 56 дивизийĕнчи 94 полкри миномет взвочĕн командирĕ пулнă. Нарва патĕнче хăйĕн взвочĕпе 39 нимĕçе тыткăна илнĕшĕн «Хĕрлĕ Çăлтăр» ордена тивĕçнĕ. Кунта вĕсене хирĕç латышсен дивизийĕ çапăçнă.

«Январьте мана, чаҫе ҫитсенех, салтаксем илме ячӗҫ. Пӗр виҫӗ пин салтак илсе килнӗ. Эпӗ хама кирлӗ таран уйӑрса тӑратнӑччӗ ӗнтӗ. Пӗтӗмӗшле строй-ра сасартӑк Катькассинчи Шӑрпӑк Куҫмине, сухалпа тӑрать, палласа илтӗм (Щербаков Кузьма Иванович, 1896–1953). Ӑна та хампа пӗрле илме май килчӗ. Ма-нӑн взводрах пулчӗ, мана итлесшӗнех марччӗ. Кӗҫех ӑна, списокра 1886 ҫ.ҫ. тесе ҫырса хунӑран, кӗвӗпе, парнесем парса хисеп тусах киле ячӗҫ».

«Февральте мана власовецсем амантрӗҫ. Ҫӗрле утнӑ чухне виҫҫӗн вырӑслах чӗнсе илчӗҫ. Патне ҫитеспе парӑнма хушрӗҫ. Эпӗ пӗр тачка хурӑн хыҫне пытанма та ӗлкӗреймерӗм – вӗсем печӗҫ те мана кӑкӑртанах тиврӗ, хирӗҫ граната ывӑтрӑм, унӑн катӑкӗ хама та ураран амантрӗ, сылтӑм ура пакӑлчакӗ патӗнче халӗ те палли пур. Ҫӑвартан юн каять пулин те хамӑрӑн-нисем патне чупса ҫитрӗм. Ҫурҫӗр иртни икӗ сехетре самолетпа Ленинграда ҫитерчӗҫ. Кунта, госпитальте сипленнӗ ҫӗрте, Юнкӑри Суворов Поликарп Павлович санинструкторпа (1920–1992, санитари взвочӗн коман-дирӗ пулнӑ) паллашрӑм».

«Взводра Октябрьски районтан Ефремов хушамат-лӑ салтак пурччӗ. Килте виҫӗ хӗр, тетчӗ. Аманса та пулин килне каясшӑн хумханатчӗ. Хама та, эпӗ ҫапла тӑратӑп, эсӗ мана пер, пер те пер, тетчӗ. Особый отдела пӗлтеретӗп тесен тин чарӑнчӗ… Пӗррехинче, Латвири Ауцы патӗнче, ларатпӑр сарайӗнче: эпӗ алӑк хыҫӗнче, Ефремов катка ҫинче, ыттисем сӗтел ҫинче картла ҫапаҫҫӗ. Ҫав хушӑра таҫтан, темле пуля лӑпах Ефремова лексе вӗлерчӗ… Рюкзакне уҫатпӑр та унта тӑп-тулли ылтӑн ҫӗрӗ, шӑлсем, сахӑр катмалли хып-кӑч. Ачасем ҫакна пытарасшӑн та мар. Ҫапах сарай хыҫне тарӑнах мар чавса чиктертӗм. Паттӑрла ҫапӑҫса

вилнĕ, тесех килне çыру çыртăм, виçĕ çĕррине лапчăтса çыру ăшне чикрĕм. Çыруне штаба кайса, тĕрĕслесрен, хамах хĕрсене штамп ларттартăм, килне ярса патăм… Пĕр 1950 ç., ДОСААФра ĕçленĕ чух, пĕр хĕрĕ (пединститутра Карамальти В.И. Вазиковапа пĕрле вĕренекенскер) мана Сундырьта шыраса тупрĕ. Ăна тĕрĕснех каласа патăм».

Ку вăрçă вăхăтĕнче хĕрсен те ятарлă çипуç тăхăнма тивнĕ. Пирĕн Яраккассинчен вĕсем тăваттăн пулнă. ***Чашкина Иустиния Николаевна*** (1923–~1997, Оçтин, **8**): «Мана 29.05.1942 мобилизовать туса, ялтан пĕрремĕш. 320-мĕш (Чапаевский) заводра çунакан сарă хутăш туса эпир. Хамăрах хурал тăрса. Вунтăватшер сехет ĕçлесе. Унтах Лешеккинчи Замятина Катьăна илсе пырса, тоже мобилизовать туса». Оçтин ку заводра вăрçă хыççăн та ĕçлеме юлнă. ***Замятина Екатерина Осиповна*** (1923–2012, **22**) кунта 1944 çулччен хĕсметре пулать. Малтанах ăна хулара фронт валли йĕркеленекен çар чаçне (324 стрелковăй дивизи – ?) илсе кайнă пулнă. Анчах çав вăхăтрах хĕрарăмсен çар çипуçĕ çитменрен çак завода куçараççĕ.

1942 çултах ***Кушманова Екатерина Даниловнан*** та (1924 ç.ç., Кĕтерин, **17**) салтак ячĕ тухать. Ăна та 320-мĕш завода çар продукцийĕ хатĕрлеме яраççĕ. Яраккассинчи икĕ Екатерина пĕр вырăнтах ĕçленĕ. Пĕррехинче, 1944 ç., вĕсен хăрушă та вăрттăн производствинче инкек сиксе тухать, сирпĕнсе саланакан хĕрӳ çулăм самантра пĕтĕм цеха сарăлать. Кĕтерин, алăксене инструкципе килĕшӳллĕн хăвăрт хупса лартнăран, вутçулăмран тухса тарма ĕлкĕреймен, участокĕпе (отделĕпе) пĕрлех çунса каять. Таврара вара унăн ырă сăнарĕ асра юлнă, чипер хĕрĕн синкерлĕ шăпи ялта чылай хушă каластарнă… «Эпир 509 мастерскойĕнче ĕçлесе, темиçе хутлă пысăк çуртра. Пирĕн отделта бомбăна тултар-

малли шариксем прессовать туса. Аки снарядсем валли пресовать туса. Кĕтерин бутовкăра сарă хутăшпа ĕçлесе (3-мĕш отдел -?). Унта вĕсен виçĕ пресс анчах пулса, кашнин патĕнче виçĕ çын… Инкек тухсан пожарнăйсем алăкне хупса лартнă. Иккĕн çеç чĕрĕ юлнă. Эпир кайса пăхрăмăр: пиллĕккĕн выртаççĕ – пĕтĕмпех çунса кайнă хуп-хура пилĕк çамрăк хĕр. Ялтан ăна пăхма амăшĕ килсе». Катя йăмăкĕ ***Замятина Калиса Ефимовна*** (1926 ç.ç., **22**, кайран Калайкасси) кунта 1943-1948 çç. ĕçленĕ, повесткăпа ăна та ФЗО шкулне янă пулнă. Вăл та 320-мĕш заводра тăван çĕршывăн хĕçпăшаллă вăйхăватне тĕреклетессишĕн хăйĕн çамрăклăхне панă.

Çĕршывра Çар хатĕрĕсен наркоматне иккĕмĕш тĕнче вăрçи пуçлансан туса хураççĕ. 1939 çултах çак наркомат Шупашкарта снаряд-бомба, сирпĕнекен, вăрçă лару-тăрăвĕнче кирлĕ тĕтрелĕх тăвакан япаласем, сирпĕнсе çунакан, çутатакан хутăшсем хатĕрлекен 320-мĕш завод тума йышăнаççĕ. Хуларан çичĕ çухрăмра 700 яхăн гектар çинче хăвăрт кăна «Чапаевски» тенĕ поселок йĕркеленет. 1941 ç. кĕркунне завод ĕçлеме те пуçланă. 1942 ç. чылай рабочи çара кайнăран тата фронтра хĕçпăшал çитсе кайман пирки производствăна сарнăран республикăри районсенчен мобилизаципех çамрăксене пуçтараççĕ. 7-мĕш ФЗО шкулĕ ячĕпе пирĕн Сĕнтĕр районĕнчен унта 360 хĕр лекет. 509 мастерскойĕнче кăна 450 рабочи, вĕсенчен çĕрĕшĕ прессовщик кирлĕ пулнă. Ку мастерскойĕнче (халĕ 12-мĕш цех) тĕрлĕ тĕслĕ снаряд, бомба, граната валли шалти пайсене хатĕрленĕ. Рабочисем темиçе сменăпа талăкра 12-шер сехет таран та ĕçленĕ, 800 грамм çăкăр илнĕ, ĕç дисциплинине пĕртак пăссан та нормăна тӳрех чакарнă. Тăшман агентури, паллах, пысăк çар завочĕ пирки пĕлнĕ, дивесантсенчен питĕ асăрханмалла пулнă. Пур склад умĕнче те хĕçпăшаллă постсем тăнă. Нумай çĕрте çак хĕрсемех по-

ста кайнă, мастерскойсенчисене наган панă, бомба склачĕ сенчисене – винтовка. «Кашни тăватă сехетре ылмашăнаттăмăр. Каннă вăхăтра кино кăтартатчĕç. Юнашар яла пăшал пеме çӳреттĕмĕр». ФЗО йĕркипе кайрантарах 1927–1930 çç. çуралнисене те илсе кайнă пулнă.[13]

Çамрăксем çамрăках, казармăри хĕрсем юрламаташлама та вăхăт тупнă. Арçынтан кая мар йывăр та хĕрӳ пурнăç хĕрсене ир хăюлантарнă. Оçтин манайман пĕр такмак:

Унталла та кунталла
Сысна пурат çохăрса.
Çулла качча каймалла,
Анчах папак хырăмра.

Карамалькасси урамĕнчи хĕрсене – Волкова Валентина Георгиевнăпа (1922 ç.ç.) Портнова Федосия Андреевнăна (1923 ç.ç.) вара фронтах илсе каяççĕ. 1942 ç. вĕсем иккĕшĕ пĕрле салтак юрри юрласа, лашапа ялсем тăрăх тутăр вĕçтерсе халăха хурлантарса çӳренĕ. Салтак чупакан хĕрсене курса хĕрарăмсем кăна мар, ватă мучисем те куççуль кăларнă, çĕр çинче халиччен пулман инкек калăпăшне, вăрçă синкерне туйнă. Иккĕшĕ те таврăнайман. Астăвăм кĕнеки тăрăх, Валентина сурансене пула 1942 ç. ноябрьтех ВССП-1113-ра вилсе кайнă, ăна Тверь облаçĕнчи Осташков хулинче пытарнă, Федосия Калуга облаçĕнче 1944 ç. çапăçура пуçне хунă.

Хальлĕхе эпир ялтах çуралса ӳснĕ, юнĕ-чунĕпе Яраккассинчи йăхсемпе тачă çыхăннă салтаксене çеç палăртрăмăр. Анчах хамăр ялпа çыхăнтарса асăнмалли çынсем татах пур.

***Мочалов Роман Григорьевич*** (1907 ç.ç., Раман). Пĕчĕк Якку (**32**) вилсен арăмĕ Матрен 1930 çç. варринче Томлайран çак Рамана киле кĕртет. Вăрçă хирĕнче вăл пач хыпарсăр çухалать. Шел, хăçан, ăçта çухални (е вилни-аманни) пирки ялта та, Томлайра та асăм юлман.

Вăрçă вăхăтĕнче ялта эвакуаципе килнĕ çынсене темиçе киле вырнаçтарнă: **3**, **9**, **15**, **18**, тен, тата. Улинсем патĕнче (**3**, Кушманова Иулита Никитична, 1919–1954), акă, пĕр вырăс хĕрарăмĕ Коля ывăлĕпе тата Женьăпа Галя (~1936 ç.ç.) хĕрĕсемпе пурăннă. Вĕсене ăшă панă пӳрт кайран колхозăн (совхозăн) хамăр ялти конюшнинче 2013 çулчченех ларчĕ («конюшни пӳрчĕ»). Çулĕ çитсен çаксен ывăлĕ те пĕр 1944 ç. Яраккассинчен вăрçа тухса каять – чăваш йăлипе, тутăр вĕçтерсе, салтак чупса тухса каять.

Шел, эвакуаципе килнисен ячĕсене палăртаймарăмăр, çав тапхăра астăвакансем те халь çукрах. Смелов Санькки (**45**) 1942 ç. вĕçĕнче хăйĕнпе пĕрле **15** килте пурăннă каччăпа пĕрле салтак чупнă пек асăннине тепре илтнĕ пек. Астăвăм кĕнекинче вара вăрçăра вилнĕ яраккассисем хушшинче ялта никам палламан икĕ çынна кăтартнă: ***Щукин Андрей Григорьевич*** (1909 ç.ç., 1943 ç. хыпарсăр çухалнă) тата ***Щербаков Михаил Александрович*** (1903 ç.ç., 12.12.1943 ç. хыпарсăр çухалнă). Ăçтан вĕсем, камсем пулнă, кам та пулин вĕсене кайран асăннă-ши?

1955 ç. пушаннă 3-мĕш кил (Улин) вырăнне Пошкăрт ялĕнчен ***Лукоянов Семен Андреевич*** (1922–1993) çемйипе куçса килет, колхозра счетовод ĕçне тытăнать. Вăл вăрçа хутшăннă, кĕçĕн лейтенантсен курсне пĕтерсен миномет взвочĕн командирĕ пулнă. Сталинград патĕнче йывăр аманать. Хăюллă офицер ун чухне II степеньлĕ Отечественнăй вăрçă орденне тивĕçнĕ.

1948 ç. пирĕн яла çавнашкалах вăрçăра пулнă те Ванюшкасси, те Упи (Красноармейски районĕ) çынни Егоров Самуил килнĕ, пĕтĕмĕшле, 5 киле вырнаçнă. Тĕрлĕ çĕре ĕçлеме çӳренĕ, ялта тĕпленсех пурăнман.

# IV. Хушса пани

## Вăрçă ачисем



Вăрçă çулĕсене пĕчĕкле пурăнса ирттернĕ ачасем –
Чурикасси шкулĕнчи 1 класс, 1947 ç.
Учительница Клопова Пелагея Петровна (**9**)



Чурикасси шкулĕнчи 4 класс экзамен чухне, 28.05.1949. Йышăнаканĕсем: Клопова П.П. учительница, арçын, класс амăшĕ Угарова Антонина Федоровна



Карамалькасси хĕрĕсем суйлава каяс умĕн (1950 çç. варри, Смеловсен килхушшинче): 1)Морозова Галя Еф., 2)Морозова Лиза Ефимовна, 3)Смелова Фекла Кузьминична, 4)Иванова Мария Васильевна, 5)Иванова Валентина Александровна, 6)Стрельцова Маргарита



Яраккасси çамрăкĕсем Оринă поххинче (1.07.1958): 1)Кольцова Надя (1), 2)Щербакова Раиса (**11**), 3)Щербакова Евгения (**12**), 4) Щербакова Зоя (**13**), 5)Фомина Юля (**39**), 6)Купанова Юля (**21**), 7) Щербаков Георгий (**11**), 8)Кошкин Илюш (**41**), 9)Замятин Володя (**24**), 10)Щербакова Галя (**12**), 11)Клопов Миша (**29**), 12)Сорокина Рита(**30**), 13)Егорова Синови (**10**), 14)Фомина Валя (**39**)



Вăрçă ачисем çитĕннĕ ĕнтĕ: 1) Щербаков Георгий (**11**,1937- 2013), 2) Кошкин Илюш (**41**, 1937-1985), 3) Клопов Мишши (**29**,1939-2014), 4) Клопов Ваççут (**26**). 1960 ç.



Карамаль çамрăкĕсем тройцă поххинче (1956 ç.) 1)Портнов Виктор Филиппович (1935 ç.ç.), 2)Морозова Галина Ефимовна (1935 ç.ç.), 3)Гаврилова Ксения Тимофеевна (1936 ç.ç.), 4)Гаврилов Александр Михайлович (1936 ç.ç.), 5)Иванова Екатерина Васильена; 6)Смелова Вера Федотовна (1936 ç.ç.)



Хорăнçола хытарма Макçикасси çырмине чул кăларма илсе кайнă Калайкассинчи 7-мĕш класс (7.05.1955). Лараççĕ: 1)Вязов Андрей (Эхветь), 2)Иванов Коля (Карамаль), 3)Смелов Гена (Карамаль), 4) Горланов Шурик (Калайкасси); малта тăраççĕ: 5)Краснова Люся (Калайкасси), 6)Бычкова Олимппа (Карамаль), 7)Замятина Люся (Ярак), 8) Щербакова Зина (Ярак), 9)Михайлова Зоя (Риккакасси), 10)Тихонова Тоня (Риккакасси), 11)Романова Люся (Карамаль) 12) Несмелова Валя (Карамаль); хыçалта тăраççĕ: 13)Кукушкина Рая (Риккакасси), 14)Купанова Юля (Ярак), 15)Павлова Матрена (Эхветь), 16)Никитина Вера (Карамаль), 17)Кольцова Ирина (Ярак), 18)Мясникова Лиза (Карамаль), 19)Воронова Лиза (Калайкасси), 20)Щербакова Евгения (Ярак), 21)Фомина Валя (Ярак)



«Коммунизм» колхозăн Калайкасси ферми умĕнче. Малта: зоотехник Елена Максимовна, Кольцова Надя (**1**), Воронова Вера (Калайкасси), Щербакова Зоя (**13**); хыçалта Калайкасси каччисем: Воронов Михаил Павлович, Краснов Геннадий Иванович, Горланов Валерий Тимофеевич



«Коммунизм» колхозри комсомолецсемпе ҫамрӑксен ударлӑ бригади, 1.03.1959: 1)Ярхинова Елексан (28), 2)Ярхинова Василиса (28), 3)Щербакова Раис (11) 4)Ярхинова Галя (28), 5)Щербакова Галя (12), 6)Егорова Синови (10), 7)Фомина Юля (39), 8)Пайкова Окҫни (Карамаль), 9)Купанова Юля (21), 10)Купанов Кеорки (21), 21)Щербаков Йоҫҫи (13), 12)Щербаков Кеорки (11), 13)Клопов Мишши (29)



Оринӑ поххине ҫитнӗ Яраккасси хӗрӗсем (1961 ҫ.): 1)Щербакова Зоя, 2)Кольцова Ирина, 3)Мартьянова Аля, 4)Замятина Люся, 5) Иванов Г.Г., 6)Фомина Валя, 7)Кольцова Надя, 8)Егорова Зина

Ветерансем çинчен

**Фомина И.В.** (1912–1976, **39**)

*Çӳллӗ, хытанка, шурӑ питлӗ, кӑмӑллӑ чӑваш хӗрарӑмӗ. Юратнӑ кукамай! Эсӗ пирӗн пата пыни чӑн-чӑн уявччӗ пирӗн çемьешӗн. Сӑну, камӑлу, сӑмаху, куллу – пурте илемлӗ, пурте çыпӑçуллӑ. Шкулта каникула ярсан, тепӗр куннех сан пата тухса вӗçтереттӗмӗр. Илӗртӳллӗ те ӑшӑччӗ сан килӳ, кукамай. Ырӑ та çепӗçчӗ сан чӗрӳ.*

*Упӑшку вӑрçа тухса кайсассӑн,*
*Юлтӑн виçӗ ачупа тӑрса.*
*Каçсерен сывлаттӑн ассӑн-ассӑн,*
*Вӑрттӑн макӑраттӑнччӗ выртса…*

*– Кукаçу вӑрçа кайнӑ чух аннӳ улттӑраччӗ, аппу тин кӑна ураланнӑччӗ, кукку вара ашшӗне пачах кураймарӗ, – куççульне шӑла-шӑла аса илеттӗн эсӗ.*

*Йывӑр пулчӗ. Мӗн кӑна тӳсмерӗн,*
*Пурпӗр çӳремерӗн çемçелсе.*
*Çӗнтерӳшӗн ним те хӗрхенмерӗн,*
*Çӗнтерсен йӑлтах пулать тесе.*

*Çав хӗн-хурлӑ çулсенче, вӑрçӑ алхаснӑ вӑхӑтра, ачусем пӗчӗк пулин те, халӑх ӗçӗнчен уйрӑлман эсӗ. Колхоз лашисене пӑхнӑ. Пӗрре, утсене шӑварнӑ вӑхӑтра, кивӗ çӑл пури, çӗрӗшсе кайнӑскер, ишӗлсе аннӑ. Эсӗ çӑла анса кайнӑ…*

*– Виççӗ путрӑм шыва – чӗрӗ юлтӑм, икӗ ӗмӗр пурӑнатӑп пулӗ эппин, – тесе шӳтлеттӗн.*

*Çирӗм сакӑр çултах мӑшӑрунтан тӑлӑха юлнӑскер, хӑвӑн пурнӑçна урӑх арçынпа çыхӑнтармасӑр, пӗчченех ӳстернӗ эсӗ виçӗ ачуна. Хыпарсӑр çухалнӑ упӑшкуна шав кӗтнӗ: «Тен, йывӑр аманнӑ, госпитальте выртать», «Çын йӗп мар-çке хыпарсӑр çухалма». Эпӗ астӑвасса, «Тӑпри ӑçта-ши хӑть Яккун? Кайса курасчӗ, чуна уçасчӗ», – теттӗн.*



Отечественнăй вăрçă вĕçленнĕренпе 20 çул çитнĕ ятпа медаль илнĕ ветерансем, Калайкасси клубĕ умĕнче, 1965 ç.



Эпир сире манмастпăр. Калайкасси, 9.05.1968



Малта ларaççĕ: 1)Кошкин А.А. (**42**), 2)Угаров Павел Захарович (Калайкасси), 3)Трофимов Федор Трофимович (Калайкасси)



Калайкасси. 1970 ç.ç. пуçламăшĕ



Çĕнтерӳçĕсене чыслама «Гигант» совхоз ертӳлĕхĕ те килнĕ, 9.05.1974



Калайкассинчи Горланов Семен Григорьевичпа (1907-1982)
Пигенешев Иван Павлович вăрçă ветеранĕсем
шкул ачисем хушшинче. 1977 çул



Çĕнтерӳ кунне палăк умĕнче палăртни, 1970 ç.ç вĕçĕ. Малта: Марасанов А.Е. (Калайкасси, 1924-1987) тăрать, трибуна умĕнче – Астраханцев И.Г.

*Шыраса тупрăм эпĕ кукаçин вилтăприне. Шел, курма тӳр килмерĕ сан ăна. Хаклă кукамайăм, Польша çĕрĕ, Краков хулинчи тăванла масар сан упăшкун канлĕхне ĕмĕр-ĕмĕрех упрĕ...*[14]

**Кошкин Андрей Алексеевич**

*Пĕве çитсен, 1936-1938 çулсенче А.А. Кошкин Ленинград хулинче службăра пулать. Салтак тивĕçĕсене ответлăха туйса пурнăçланă.*

*Совет çарĕнчен таврăнсан тăван килĕнче нумай пурăнма май килмест унăн. Иккĕмĕш тĕнче вăрçи пуçлансан, малтанхи кунсенчех вăл Тăван çĕршыва хӳтĕлеме фронта тухса каять. Тĕрлĕ фронтсенче çапăçса ирсĕр нимĕç фашисчĕсене сахал мар тĕп тунă. 1942 çулхи февралĕн 9-мĕшĕнче чăваш каччи пĕр çапăçура йывăр аманать. Госпитальте сывалнă хыççăн алла каллех пăшал тытать. 1943 çулта Андрей Алексеевич парти ретне кĕрет. Çĕнтерӳ кунне вăл Австрин тĕп хулинче Венăра кĕтсе илет.*[15]

**Смелов Александр Иванович**

*Икĕ хутчен аманса сывалнă хыççăн ăна вăхăтлăха киле кайса вăй пухма сĕнеççĕ. Çак сĕнӳ çине пĕр хурав çеç пама пултарнă А. Смелов.*



Вăрçăпа тыл ветĕранĕсене Яраккасси клубĕнче чысланă чух, 8.05.2000

*– Манăн атте фронтра ирсĕр нимĕç фашисчĕсене хирĕç çапăçнă вăхăтра эпĕ ниепле те килте ларма пултараймастăп – тенĕ вăл. Хăйĕн хавшак сывлăхне пăхмасăрах вăрçă хирне тухса каять.*

*Тăван ялне вăл 1946 çул вĕçĕнче таврăнать. Килĕнче темиçе эрне каннă хыççăнах Калайкассинчи вăтам шкулта военрук пулса ĕçлеме пуçлать. 1947-1954 çулсенче Александр Иванович ДОСААФ райкомĕн председателĕ пулса ĕçлет. Унтан, тивĕçлĕ канăва кайиччен, хуçалăх производствине активлă хутшăнать.*

*Фронтра хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн А. Смелова 1 степень Отечествăллă вăрçă тата Хĕрлĕ çăлтăр орденĕсем, 5 медаль парса наградăланă.*

*Хăйĕн мăшăрĕпе Анна Ефимовнăпа вĕсем 5 хĕр пăхса ӳстернĕ. Пурте халăх хуçалăхĕн тĕрлĕ отраслĕсенче вăй хураççĕ.*[16]

Петров Николай Герасимович

*1937 çулхи октябрь уйăхĕнче Мăн Сĕнтĕр çар комиссариачĕ урлă Хĕрлĕ çара каять. Слаута хулинче 26-мĕш кавалери дивизийĕнче 104-мĕш кавалери полкĕнче службăра тăнă. 1938 çулхи апрель уйăхĕнче ăна Н.Я. Пархоменко ячĕллĕ 14-мĕш кавалери дивизине 56-мĕш кавалери полкне куçарнă. Унта вăл полкăн лашаллă разведчиксен взводĕнче службăра пулнă. 1939 çулта Хĕвеланăç Украинăна ирĕке кăларнă çĕрте хĕрӳ çапăçусене хутшăнать. Ăна унта коммунистсен парти членне кĕме кандидата тăратнă.*

*Тернополь хулинчен пуçласа Варшавăна çитнĕ вăл. Хĕл çитсен вĕсен полкне Ровно хулине куçарнă. 1940 çулхи январь уйăхĕнче Н. Петрова Коростень хулинчи пехота училищине вĕренме янă…*

*– Эпир Сталингад çывăхне эшелонсем çине çар хатĕрĕсем тиесе фронта тухса кайрăмăр. Иловля станцийĕнче эшелонсем çинчен ансан çурçĕр енчен Ста-*

*лингград патĕнче çапăçусемпе пытăмăр. Котлубань станцине ирĕке кăларма пĕрремĕш каçхи çапăçăва кĕтĕмĕр. Йывăр, юнлă çапăçусем… Вăрçă çухатусемсĕр пулмасть. Нимĕçсен те, пирĕннисен те çухатусем нумай пулнă. Çапăçура салтаксем пучахсене каснă пек тăкăннă. Иртен пуçласа каçчен фашистсем пирĕн çине бомбăсем, минăсем, снарядсем тăкнă. Пирĕн те пулнă вĕсем. Пирĕн енчен самолетсем ун чухне, пĕрремĕш хут, нимĕçсем çине термитлă бомбăсене пăрахса, ăшаларĕç. Эпир пурте чăтнă, тӳснĕ. Çирĕп тăнă. «Пĕр утăм та каялла чакмалла мар!», «Хыçра – Сталинград», «За Волгой земли нет». Çакăн пек приказсем пулнă пирĕншĕн. 3 уйăх ытла пирĕн дивизи Сталинград хули çывăхĕнче çапăçусенче пулчĕ. 1942 çулхи пĕр каçхи çапăçура «разведка боем» ирттернĕ вăхăтра мана, фашистсен çурăлакан пульли сылтăм урaран йывăр амантрĕ. Санчаçе лекрĕм. Унтан Камышин хулинчи госпитале çитерчĕç. Октябрĕн 21-мĕшĕнче Хусан хулине санитари поезчĕпе çитрĕмĕр. Унтан Шупашкарти, Атăл хĕрринче вырнаçнă 3057-мĕш номерлĕ госпитале вырнаçтарчĕç. 5 уйăх сиплентĕм. 1943 çулхи мартăн 5-мĕшĕнче Шупашкарти эвакогоспитальтен Мария йăмăк лашапа тăван киле илсе килчĕ. 1944 çулхи август уйăхĕнче вăрçăччен вăй хунă вырăна ĕçлеме кĕтĕм. 1947 çулта мана районти çар комиссариатне чĕнсе Аслă Отечественнăй вăрçăн II степень орденне пачĕç. Унччен малтан «За победу над Германией» тата тылра лайăх ĕçленĕшĕн те медальсем панăччĕ.*[17]

Пурăннă чухне Окçни мăнаки (Ксения Даниловна, качча кайиччен Чашкина) Яраккассине, çуралнă килне (**10**) вĕçĕм килсе çӳретчĕ. Унăн икĕ ывăлĕ те (Кольăпа Иван) вăрçăран таврăнманччĕ те мамокпа калаçмалли самаяхчĕ. Кайранхи çулсенче партизанра

çӳренӗ пӗр ывӑлӗ пирки чӑвашра та, Белоруссире те хаçат-журналсем нумай çырчӗç. Ывӑлӗ Яшков Николай Григорьевич (1921–1944, Сӑпайкасси) Ишлейри вӑтам шкул хыççӑн 1939 ç. Шупашкарти учительсен институтне вӗренме кӗнӗ. Çав кӗркуннех ӑна çара илеççӗ. Кавалеринче пулать, командира вӗренет. Вӑрçӑ пуçлансан унтан хыпар пулман, икӗ çултан çеç çыру килет: «Манӑн адрес – симӗс вӑрман. Çырӑва кайӑкран парса яратӑп. Чӗрӗ таврӑнсан каласа парӑп… Таврӑнаймасан – асӑнса пурӑнӑр мана…» Ку вӑхӑтра вӑл Минск таврашӗнчи Ленинла комсомол ячӗллӗ «Искра» партизан отрядӗнче пулнӑ иккен. Çак отряд ӗçӗ-хӗлӗ çинчен вырӑнти архивра чылай материал упранса юлнӑ (Белорусь партархивӗ, ф. 4077, д. 147), кӗнеке те тухнӑ кайран – Николай ячӗ вӗсенче час-часах тӗл пулать. Чукун çул çинчи операцисенче çеç вуннӑ ытла ӑнӑçлӑ хутшӑннӑ. 1944 ç. мартра вара партизансен çак отрячӗ Борисов районӗнчи Верески ялӗнче вырнаçнӑ нимӗççен пысӑк гарнизонне (темиçе çӗр салтак) пӗтерме приказ илет. Штурмра 17 çынлӑ пӗр ушкӑнне Яшков Н.Г. ертсе пынӑ. Çапӑçу вӑхӑтӗнче вӑл темиçе çуртра та тӑшмана тӗп тӑвать. Тӑшман вирлӗ хӳтӗленекен пӗр пысӑк çурта тапӑннӑ чух вара, подвалӗнче çар хатӗрӗсем нумай упраннине пӗлсе, перкелешӗ самантра нимӗç формине тӑхӑннӑ Николай унта кӗрсе кайма май тупать. Çӗнтерӗве çывхартса пӗтӗм подвала çурчӗ-мӗнӗ хӑйпе пӗрле сиктерсе ярать… Унӑн паттӑрлӑхӗ çинчен отряд командирӗ пулнӑ Дерябин В.П. хӑй те темиçе хут та каласа панӑ, тӑванӗсем патне Шупашкара та вӑл килсе çӳренӗ.[18]

Карамалькассинче çуралса ӳснӗ, Шупашкарта пурӑнакан Алихметкина Елизавета 1994 ç. аса илнинчен:

*«Ялта питӗ начар пурӑннӑран 1941 ç. пуçламӑшӗнче эпӗ килтен вербовкӑпа тухса кайрӑм. Прибалти-*

*кăра аэродром тума çынсем лăпах кирлĕ пулнă. Ĕçĕ йывăрччĕ, иртен пуçласа каçчен бетон сараттăмăр.*

*Вăрçăн пĕрремĕш куннех пирĕн аэродром бомбăсем айне пулчĕ, пĕтĕм самолет çунса кайрĕ. Эпир, юлташ хĕрпе, баракран сиксе тухрăмăр та ăçта тарса хăтăлмаллине те пĕлместпĕр. Хăранипе урасем чĕтреççĕ... Çуранах киле таврăнас терĕмĕр, кăнтăрла вăрмансенче пытанаттăмăр, çĕрле утаттăмăр.*

*Темлерен пĕр хутор патне тухрăмăр, малалла утма нимле вăй та юлманччĕ, питĕ çиес килет тата. Кĕрнеклĕ пĕр хĕрарăм пире килне кĕртрĕ, çитерчĕ-ĕçтерчĕ. Эпир ăçтан пулнине пĕлсен тĕлĕнсех кайрĕ: «Ой, ăçта эсир хăвăрăн чухăн çĕршывна каятăр, эсир хитре, çамрăк, кунта эсир райри пек пурăнаттăр». Кун пек сăмахсене илтсен эпир Симăпа васкасах тухса утрăмăр. Анчах кĕçех пире нимĕçсем хăваласа çитрĕç. Сарайĕнче эрне тытрĕç, столовăй валли паранкă шуратрăмăр. Пĕррехинче çĕрле пирĕн тухса тарма май килчĕ. Темиçе кун вăрмансемпе шурлăхсем тăрăх çĕтсе çӳресен пĕр кордона тухрăмăр. Лесник пире курсан хăранипе сăхсăхрĕ, çапах çул çине кăштах çипуç пачĕ, тăрантарчĕ.*

*Минска çитрĕмĕр, хула пĕтĕмпех арканнă, çурчĕсем çуннă. Хыççăн – Могилев хули, Смоленск тăрăхĕнчи ялсем, пурне каласа та пĕтереймĕн… Виçĕ уйăхран çеç эпир Сĕнтĕре çитрĕмĕр. Ĕненмесĕр хамăръялсем мана тытса пăхаççĕ: «Ниушлĕ çур çул каялла тухса кайнă ку Лиза çитрĕ?» – теççĕ. Курса-тӳссе иртнернипе лăпланаймасăр кайран нумай пурăнтăм».*[19]

Иштерек хĕрĕ пулнă Белова (Башмакова) Неонила Степановна (1916 ç.ç.) Чапаевски завод тума хутшăнни пирки кăçал аса илнинчен: «1937 ç. çу кунĕсен. Ялти вăйпитти çамрăксене çар завочĕ тума пуçтараççĕ. Ăçта каймалла – пĕлместĕп, анчах завод тăвакансен йышне

çырăнтăм... Çĕнĕ ĕçе кӳлĕннĕ яш-кĕрĕм пăчкăпа та пуртăпа çĕр çулхи юмансене тӳнтерни, тымарĕсене взрывчаткăпа сирпĕтсе кăларни, пулас завод валли уçă вырăн хатĕрлени ĕнерхи пекех куç умĕнче. Орел облаçĕнчен килнĕ виçĕ мастер хамăра котлован чавтарма пуçласан салтаксем валли казарма пулать пуль терĕмĕр, хăйсем те вăрçă тухма пултарасси пирки сăмахлатчĕç. Ĕçсем питĕ хăвăрт пулса пычĕç. Кĕçех вăрман варринче чавнă котлованта кирпĕч стенасем купалама пуçларăмăр. Эпир, хамăр ушкăнра икĕ каменщик пулса та, сменăра 12 пин кирпĕч хураттăмăр. Вăрттăн объект пулнă май стенисене çĕклессипе те, çивиттине витессипе те ытларах çĕрле ĕçлеттĕмĕр. (Пырсанах пире ĕçри вăрттăнлăхсене никама та каласа памалла марри пирки тупа партарчĕç). Хамăр сисмесĕрех майĕпен çĕр айĕнче ĕçлеме пуçларăмăр...»[20]



Клопов Ваççутне (1933-2007, **29**) çара ăсатма пухăннă тăван-пĕтен (1953 ç.). Малта лараççĕ: 1)Валерьян (**29**), 2)Воронов Александр Кириллович (Калайкасси), 3)Ваççут хăй, 4)кĕçĕн шăллĕ Миша (**29**); тăраççĕ: 6)Скворцова Екатерина (Калайкасси), 7) амăшĕ, 8)Иванова Елена Ефимовна (**33**) 9)Скворцова Мария (Калайкасси), 11)Воронова Лидия амăшĕ, 12)Воронова Мария



Анна Кёркине (1949-1999, **5**) салтака ăсатаççĕ (23.11.1968): 1) йыснăшĕ (Ишлей патĕнчен), 2)Голубев Веня (**35**), 3)Якку Кольли (**39**), 4) Лукка Санькки (**8**), 5)Клопова Зоя (**31**), 6) Кольцова Ирина (**6**), 7) призывник Егоров Георгий Самуилович (**5**), 8)Голубев Мефодь (**36**), 9)Кури Кольли (**23**), 10)Кольцова Августина (**1**), 11)Ласăр Витти (Карамаль), 12)-?



Борис çара кайнӑ чух (1972 ç. октябрь): 1)Степанов В.А. (**38**), 2)Андреев А.А. (**42**), 3)Лукоянов Б.С. (**3**, салтак тутрипе), 4)Кошкин А.Л. (**8**), 5)Ярхинов В.Г. (**23**), 6)Данилов А.Ф. (**17**), 7)курӑнмасть, 8)Голубев М.П. (**36**), 9)Ярхинов Н.Г. (**23**)



Осипов Славик (1955-2015, **40**) салтака кайнӑ чух, 2.05.1973



Ярхинов Виталий Григорьевич салтак чупнӑ чух (1974 ç. май): 1)Степанов Александр Степанович, 2)йыснӑшӗ Крылов (Шайкилтӗ), 3)Ярхинов Ваççа (пиччӗшӗн хӗрӗпе), 4)салтак каякан (тутӑрпа), 5)Ярхинов Коля (1947-1991); малта лараççӗ: 6)Фомин Коля (1948–2008), 7)Данилов Толя (1947–2005), 8)Степанов Володя (1952–2000)



Клопов Виталий Васильевича çара ӑсатнӑ самант (8.11.1975) Андреев Андрей (1950 ç.ç, **42**), Степанов Володя (**38**), Голубев Веня (**35**), Егоров Георгий (**5**), Смелова Тамара (**45**), Данилова Ира (1959 ç.ç, **17**), Смелова Оля (1960 ç.ç., **45**) т.ыт.те.



Салтака каякан Клопов В.В. (**44**) тăван ял хĕрĕсемпе сывпуллашать. 8.11.1975



Салтака ăсатнă чух (1982ç.), 1)Портнов Виталий Алексеевич (Карамаль), 2)Кошкина Светлана (**41**), 3)Клопов Леонид Валерьянович (**29**), 4)Таня, 5)Александров Вячеслав (Сăпай).



Фашизма çĕнтернĕренпе 40 çул çитнĕ ятпа çĕкленĕ Ялавпа пĕрле Калайкасси шкулĕнчи чи лайăх вĕренекенсем тăраççĕ, 19.02.1985



Клопов Санькkине (**29**) салтака ăсатни, килĕнче, 1986 ç. декабрь



Иванов Олега (**31**) салтака ăсатнă каç (1987 ç.), 1) Клопова Марина (**29**), 2)Фомина Эльвира (**39**), 3)Иванова Оля (**31**), 4) Клопов Юрккă (**29**), 5)хăй призывник, 6)Щербакова Алена (**12**), 7)Клопов Леня (**29**), 8)Иванова Светлана (**31**) т.ыт.те



Фомин Витталине (**39**) салтака ăсатни, 11.1987



Фомин Левине (**27**) салтака ăсатни (11.1989)



Ярхинов Владимир Николаевич (1979 ç.ç., **23**) çара тухса кайнă чухнехи ял пуçĕнче Торра асăннă самант (9.06.1997, 6 сехет). Курăнаççĕ: Щукин А.А. (**30**), Ярхинов В.Г. (**28**), Ярхинов В.Н., Иванова Н.Н. (Карамаль), Ерагин Е.Е. (**18**), Ильин А.А. (**2**), Ярхинов А.Н. (**23**), Клопов А.В. (**44**), Смелов Р.В. (Карамаль), Волков В.И. (Çĕнъял Оринă) т.ыт. те



Ерагин Аганея (**18**) çара ăсатаççĕ, 2.07.2012



Çара ăсатнă чух (Калайкассинче, 1941 ç.)



Яла отпуска салтак килнĕ. Малта ашшĕпе амăшĕ лараççĕ, тăраççĕ: 2)Измайлов Николай Васильевич, 5)колхоз председателĕ Кошкин Андрей Алексеевич, 6)отпускник Сергеев Герман Федотович, 8)Мясников Александр Иванович. Карамалькасси, 1950 çç.



Малта лараççĕ: 1)Щербакова Галя (**12**)-?, 2)Гаврилова Л. М. (Карамаль)-?, 3)Щербаков А.М. (**12**), 4)Ярхинова Василиса (**28**), 5)Чашкина Р.Г. (**8**), 6)Щербакова З.Н. (**13**); хыçалта тăраççĕ: 7) Надя (**1**)-?, 8)Егорова З.И. (**10**), 9)Пайкова Окçни (Карамаль), 10), 11)Фомина Ю.Я. (**39**), 12)Сорокина Верккă (**30**), Мочалова Ф.Р. (**32**). 1950 çç. варри



Голубев Юрий Павлович (**36**, 1948-2003) салтакран таврӑнсан (30.04.1968) пӗрле тӑраççӗ: Осипов Славик, Ерагин Женя, Ярхинов Витя, Клопов Владик.



Çартан пирӗн ялсем килнӗ (1971 ç. май). 1)Балтфлот аслӑ матросӗ Данилов Анатолий Фадеевич, 2)Фомин Н.В., 3)Ярхинов В.Г., 4)Егоров Л.Е, 5)Таймасов В.М. (Калайкасси), 6)Польшӑран Голубев Мефодий Павлович сержант, 7)Лукоянов Б.С.



Эсир тунă çĕнтерĕве çухатмастпăр (8.05.2000)



Çарта пулнă яраксем каллех стройра, 8.05.2000



Ярак арçынĕсем çĕршыва хӳтĕлеме яланах хатĕр. 8.05.2000, клуб умĕнче



Уяв вă-
хăтĕнчи
хисеплĕ
хурал,
2003 ç.



Халăх паттăрлăхне асран ямастпăр 5.09.2009



Арçынсем уттипе киленекен арăмĕсем. 5.09.2009



Çĕнтерӳ кунĕ – яраксемшĕн пысăк уяв, 8.05.2011 ç.

## Аталану çул-йĕрĕнчи ялйыш



«Гигант» совхозăн 2 уй-хир бригади, 1980 çç.



Çăва карти валли кашта хатĕрлеме Йăлăма кайнă ушкăн, 14.03.1998



Хĕрӳ ĕçре (Йăлăм, 14.03.1998)





Ял сăрине (1.08.1998) пуçтараннă ялйыша савăнтаракан çамрăксем



Яракпа Карамаль хĕрĕсем. 1.08.1998




Яла килекен газ пăрăхне тĕп линипе сыпма вырăн хатĕрлени.
Сăпай ойĕ, 2.01.2000



Хĕллехи спорт ăмăртăвĕсен ялти уявĕ



Ярак ойне паранкӑ пуҫтарма тухнӑ ялйыш, 4.09.1999



Аслă çĕнтерӳ 55 çул çитнине уявлакан ялйыш



Яраккассисем кунти шкул çуртне сӳтсе кайса хӑйсен ялӗнче клуб тӑвасшӑн.
Çорлатри, 12.06.2000



Çамрăк ăрăвăн кунçулĕ тăнăçлă пултăр теççĕ
малта ларакан ватăсем. 8.05.2000



Клуб тума пура турттарса килсен ĕç-пуçа сӳтсе явни, 17.06.2000



Çĕнĕ клуба хăпартнă чухнехи нӳмере, 12.06.2002



Ялти клуб никĕсне яма Сартон сăртне хăйăр илме кайнисем
Карăшлăх, 19.07.2000



Яраккасси ял клубĕ: кивви тата çĕнни, 29.02.2008



Уҫас умӗн клуб умне майлаштарни, 31.10.2009



Оличчари йывăҫ-турата пуҫтарнă чух, 22.05.2010
(яраксем ял лаптăкне тирпейлӗ тытаҫҫӗ)




Кĕтӳ кăларма тухнă ялйыш (юнкун, Нӳрек сăрчĕ): «Выльăх кĕтӳре лăпкă çӳретĕр, ларса кĕтмелле пултăр; çăмарта пек çавракa, мăнтăр пултăр».



# Вĕçĕнче калани

Маларах асăннă çынсем пурте пирĕн ялта пурăннă, кунĕн-çĕрĕн ĕçленĕ, пирĕн урамсем тăрăх утнă, уйхирте тарланă, пĕр-пĕринпе хутшăннă, савăнмалла чух савăннă, ташланă, ял янратса юрланă, вăрçăнмалли те тупăннă. Вĕсен йăли-йĕркисене халĕ эпир тăсатпăр, вĕсен сăмахĕсемпе халĕ эпир калаçатпăр, тен, шухăшĕмĕчĕсене те пурнăçлатпăр.

Вăхăт самаях иртрĕ. Ялта ăратăсем те, килйышсем те улшăнчĕç. Çĕнĕ çынсем Яраккассинче çӳреççĕ. Эпир асăннă çынсем шухăшлама та пултарайман пуль, хăйсен хĕлĕн-çĕвĕн ĕçлесе тунă кил-çурчĕсем арканасса, хăйсем вырăнĕсенче урăххисем пурăнасса. Мĕн тăвас, пурнăç малаллах шăвать. Пирĕн, ку тĕнчерисен, вĕсене манманни паха. Эпир вĕсене асăнатпăр, вĕсем пире ан асăнччăр. Тăван çĕршыв чысне çарта та, ялта та упраса хăварнă тăванăмăрсен ячĕсем халăх асĕнче ĕмĕр-ĕмĕр упранĕç. Вĕсем вилĕмсĕр.

Кăларăма хатĕрлеме ялта, хамăр тăрăхра 1970 çултан пуçласа тĕрлĕ çынсем каланисемпе усă курнă. Пĕтĕмĕшле информацие ытларах çаксем панă: Голубев Деомид Наумович (1887–1978, **36**), Чашкина Елизавета Александровна (1894–1972, **10**), Щербакова Мария Ефремовна (1896–1982, **11**), Купанов Артемий Иванович (1907–1987, **21**), Степанова Мария Григорьевна (1910–1997, **38**), Клопова Федосия Семеновна (1912–1992, **34**), Егоров Евстафий Ефремович (1915–1992, **37**), Петров Николай Герасимович (1915–2005, **7**), Смелов Александр Иванович (1925–2005, **45**), Клопов Евстафий Иванович (1930–1993, **10б**) т.ыт.те. Çавнашкалах ЧР патшалăх истори архивĕнчи документсемпе (ытларах 44 фондпа) усă курнă, Астăвăм кĕнекин томĕсенче çырнисене шута илнĕ.

Алçыру нумай çулсем хушшинче, çĕрĕ-çĕрĕпе çывăрмасăр, пĕрчĕн-пĕрчĕн информаци пухăннă май

калăпланнă – пĕри пĕр сăмах калать, тепри тепĕр сăмах хушать. Асăннă кашни çыннăннех, хăшĕн-пĕрин, тен, йăнăшрах кайма пултарсан та, тĕрлĕ çăлкуçсемпе усă курса ятне-шывне, хăçан çуралнă-вилнине палăртма тăрăшрăм. Паллах, çав вăхăтрах кĕнеке туса халăх патне çитересех тесен йывăрлăхсем, тăкакĕсем те пур. Çапах, палăртма кăмăллă, Яраккасси кунçулне туса Çĕр çинче пурăнса ирттернисемшĕн, несĕлĕ-тăванĕсемшĕн хăйĕн çине яваплăх илме пултаракансем пирĕн нумай. Малтанхи хамăр ялсен ĕçне-хĕлне асра тытса, ыррине те, урăхлараххине те шута илсе, пурнăçа малалла тивĕçлĕ тăсассишĕн ăнтăлса, ваттисемшĕн хуравлама пултарса çаксем вара Кĕнекене çут тĕнчене кăларма хăйсен тӳпине хыврĕç:

Клопов Александр Валерианович (1968 ç.ç., **29**)
Жукова (Кобрчакова) Елизавета Александровна (1939 ç.ç., **5а)**
Кольцов Петр Леонидович (1965 ç.ç., **6**)
Клопов Анатолий Васильевич (1966 ç.ç., **44**)
Скворцова (Смелова) Тамара Александровна (1955 ç.ç., **45**)
Полякова (Смелова) Вера Александровна (1958 ç.ç., **45**)
Замятин Рудольф Германович (1966 ç.ç., **22**)
Замятина Эльвира Витальевна (1968 ç.ç., **22**)
Замятина Дина Рудольфовна (1992 ç.ç., **22**)
Клопов Виталий Васильевич (1957 ç.ç., **46**)
Замятин Виталий Петрович (1952 ç.ç., **1**)
Новикова (Данилова) Рена Фадеевна (1957 ç.ç., **17**)
Веселова (Лукоянова) Раиса Семеновна (1957 ç.ç., **3**)
Ильденеева (Данилова) Валентина Фадеевна (1962 ç.ç., **17**)
Кириллова (Мясникова) Людмила Прокопьевна (1949ç.ç., **43**)
Голубев Мефодий Павлович (1950 ç.ç., **36**)
Голубев Валерий Павлович (1958 ç.ç., **36**)
Смелов Анатолий Геннадьевич (1979 ç.ç., **11**)
Фомин Сергей Александрович (1966 çç., **27б)**

Михайлова (Кошкина) Светлана Ильинична (1963 ç.ç., **41**)
Егоров Леонид Евстафьевич (1947 ç.ç., **37**)
Кожанова Ольга Геннадьевна (1971 ç.ç., **32**)
Кожанов Валерий Николаевич (1966 ç.ç., **32**)
Иванов Олег Геннадьевич (1969 ç.ç., **31**)
Иванова (Замятина) Людмила Степановна (1941 ç.ç., **25**)
Рубцов Валерий Семенович (1958 ç,ç., Калайкасси)

# Асăрхаттарусем

1.ГА РМЭ, ф.16, оп. 1, д. 799, л.3.

2.ГИА ЧР, ф. 44. оп. 1, д. 1561. л. 16.

3.ГА РМЭ, ф. 132, оп. 1, д. 7, лл. 40, 62.

4.Çĕнтерӳ ялавĕ, 3.02.1983 (Е. Ерагин çырнинчен).

5.Çĕнтерӳ ялавĕ, 4.02.1986.

6.ГИА ЧР, ф. 642, оп. 17, д. 100, лл. 116-128.

7.Ерлыгин А.В. Сурский и Казанский оборонительные рубежи. – Чебоксары, 2014.

8.ГИА ЧР, ф. Р-642, оп. 17, д. 240, л. 31.

9.Çĕнтерӳ ялавĕ, 23.11.2005 (Л. Романова сăввинчен).

10.Çĕнтерӳ ялавĕ, 7.05.1977 (А. Егоров сăввинчен).

11.Çĕнтерӳ ялавĕ, 14.06.2000.

12.Çĕнтерӳ ялавĕ, 12.05.1983 (Е. Ерагин çырнинчен).

13.ФГУП «ЧПО им. В.И. Чапаева: История, люди, события в очерках, статьях и воспоминаниях. – Чебоксары, 2006; ГИА ЧР, ф. Р-1041, оп. 1, д. 757, лл. 14-16.

14.Çĕнтерӳ ялавĕ, 23.09.1982. Ку хĕрарăмăн упăшки Яракри Кобрчаков (Фомин) Яков Николаевич, çыраканĕ – вĕсен Ахманене качча кайнă хĕрĕн ывăлĕ, Ленинградри студент Дегтярёв Геннадий Анатольевич.

15.Çĕнтерӳ ялавĕ, 21.03.1987 (М. Дмитриев çырнă тăрăх).

16.Çĕнтерӳ ялавĕ, 11.07.1987 (М. Исаев çырнă тăрăх).

17.Çĕнтерӳ ялавĕ, 31.01.1998 (С. Кошкин çырнă тăрăх).

18.Коммунизм ялавĕ, 15.04.1989.

19.Советская Чувашия, 15.11.1994.

20.Çĕнтерӳ ялавĕ, 31.01.2015.

# Тупмалли

Кӳртӗм..........................................................................3

I. Малтанхи вӑрҫӑсене хутшӑнни...........................9

II Хӗрӳ ӗҫре вӑрҫа тӳссе ирттернӗ .....................25

III. Тӑван ҫӗршыв чӗнсе илсен.............................53

IV. Хушса пани:

Вӑрҫӑ ачисем..................................................91

Ветерансен ҫинчен...........................................96

Ҫӗнтерӗве упрамалла......................................106

Аталану ҫул-йӗрӗнчи ялйыш........................122

Вӗҫӗнче калани........................................................134

Асӑрхаттарусем........................................................ 137

Чувашская народная академия наук и искусств

Научно-популярное издание

В книге рассказано об участии уроженцев деревни Яраккасы Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики в Великой Отечественной войне 1941-1945 годов. Издание основывается не только на устных рассказах и пересказах односельчан, оно обогащено также фотографиями и данными соответствующий литературы и архивов.

Ерагин Евгений Евстафьевич

# Яраккасинцы приблизили победу

Редактор Г.А. Дегтярёв

Корректор И.Е. Иванова

Технический редактор А.В. Сорокин

Компьютерный набор Г.Г. Николаевой
Компьютерная верстка Е.В. Шабалкиной
Дизайн обложки Н.Л. Лукиной

Подписано в печать 20.04.2015. Формат 60x84/16.
Бумага офсетная. Печать офсетная.
Гарнитура Schoolbook. Физ. печ. л. 8,75.
Тираж 100 экз. Заказ № К-164. Цена 500 руб.

Отпечатано в типографии ИП Сорокина А.В. «Новое время»
428034, Чебоксары, ул. Мичмана Павлова, 50/1
Тел.: (8352) 32-33-53, 46-43-46.
E-mail: newtime1@mail.ru